1710

поэма Д. Н. Йайта
наблюдения соч. Т. Ш.
(неречен)
Потреб. - копия

Н. В. Никольскому от автора на памят[ь] Ф. Павлов. 1922. 25/X.

Ф. П. Павлов.

# ЙАЛТА

4-тă ПАЙЛĂ ТРАМĂ.

(В деревне. Драма в 4-х действ.).

На чувашском языке.

Издание Л. Н. Павловой.

ШУПАШКАР
Чебоксарская Гостипография
1922 ç.

Çакӑ кӗнекене Шупашкарта автӑртан хӗйӗнҫен илме пулаѓ. Тӑта Канашӑн Халӑха Вӗрентекен Пайӗн кӗнеке макаҫӗнӗнҫете сутаççӗ. Хакӗ ылтӑн укçа хакӗ ӳснӗ майӗпе хӑпарса пыраѓ.

С требованием обращаться в г. Чебоксары, Центральный Чувашский Педтехникум Ф. П. Павлову, а также в книжный магазин Обл. Отд. Нар. Образов.

Цена по курсу золотой валюты.

*Издательница.*

Р. Ц. тираж 2500 экз.

Ф. П. Павлов.

# ЙАЛТА

4-тӑ пайлӑ трамӑ.

(В деревне. Драма в 4-х действиях).

На чувашском языке.

Издание Л. Н. Павловой.

ШУПАШКАР
Чебоксарская Гостипография
1922 ç.

# ТРАМӐРИ ÇЫНСЕМ.

1. Пӑрҭкан.
2. Йеђук, унӑн амаçури хӗрӗ.
3. Ваҥук, каҭҭӑ.
4 Çтаппан, авланнӑ çын.
5. Йӑскар, карҭӑк.
6. Муççа, унӑн упӑшки.
7. Пађђа, салтак.
8. Старастӑ.
9. Çамрӑк аҭа.
10. Вата çын.
11. Туй пуçӗ.
12. Хӑйматлӑх.
13. Кӗреке пуçӗн йулташӗ.
14. 1-мӗш туйаҭи, 2-мӗш туйаҭи.
15. 1-мӗш туйарӑмӗ, 2-мӗш туйарӑмӗ.

Хӗрсем, аҭасем, каҭҭӑсем, хӗрçумсем, туй халӑхсем, туйаҭисем, туйарӑмсем тата ыттисем те.

Трамӑри ӗç Кермани вӑрçи вӑхӑтӗнҭе пулнӑ.

# ПЕРЕМЕШ ПАЙЕ.

(Пăрḑкан пўртĕнḑе).

## 1-мĕш куранни.

*Йеḑук. Пăртḑкан. (ḵанса выртать)*

*Йеḑук. (кĕрет).* Ĕнте сурăхсене хупрăм.

*Пăртḑкан.* Купăста шăвартăн-и?

*Йеḑук.* Шăвартăм.

*Пăртḑкан.* Ĕнисене мĕн патăн?

*Йеḑук.* Пахḑаран курăк çулса патăм.

*Пăртḑкан.* Лашисене тăта?

*Йеḑук.* Лашисене те шăвартăм, апат патăм.

*Пăртḑкан.* Мĕн патăн?

*Йеḑук.* Сĕлĕ.

*Пăртḑкан.* Йурĕ, апла пулсан. Ĕнте кайса çăварах.

*Йеḑук.* Анне, ман пĕрте ыйăх килмест.

*Пăртḑкан.* Мĕн тăта?

*Йеḑук.* Епĕ урама кайатăп...

*Пăртḑкан. (тăрса ларать).* Мĕн? Ан ḑупса çўренĕ пултăр.

*Йеḑук.* Анне, хĕрсем пурте урамра, йурăсем йурлаççĕ, йепле манăн пĕḑḑепех кайса çывăрас?

*Пăртḑкан.* Ан пелке, ḑупкăн! Пĕре-пĕре асăнмаллăх тупăн-ха хуна валли.

*Йеҫук,* Анне, мӗншӗн апла калатӑн?

*Пӑртҫкан.* Епӗ санран аслӑрахи, аслӑрах мар-и? *(ӳпкелесе)* Итле-ха. Ма есӗ ман сӑмахран тухатӑн? Епӗ хуна ҫуратнӑ апу мар пулсанта ман саншӑн ҫӗре ыратать.

*Йеҫук.* Анне, есӗ йаланах ҫапла калатӑн.

*Пӑртҫкан.* Ех, Йеҫук. Вилсе кайӑпта куҫаймӑп, ҫав. „Ӗлӗк анне ҫапла калаҫҫӗ", тесе сахал мар астӑвӑн, вара,

*Йеҫук* Анне, темскер ҫинҫен калаҫатӑн есӗ, епӗ ӑнланаймастӑп.

*Пӑртҫкан* Тӗрӗс каларӑн. Ҫӑнахта нимте пӗлместӗн есӗ. Ҫипуҫ ырӑ, хырӑм тутӑ, тата мӗн кирлӗ?

*Йеҫук* Мана нимте кирлӗ мар.

*Пӑртҫкан.* Ӳхмах!.. Аҫупа апу камшӑн тӑрӑшнӑ тӑта? Пирӗн пуйанлӑх йур пек ҫӳлтен ҫуса пулман. Ӗлӗкренпе ҫӗр тара илсе пухнӑ ӑна. Есӗ вӑл хурапа шурӑна тӗлӗкре те курман. Аҫу вилсен пӗтӗмпех хам пуҫ ҫине йулҫӗ те лайӑх ҫурӑма тарлаттарҫӗ.

*Йеҫук.* Анне, мӗншӗн-ха ҫилленетӗн? Епӗ сан сӑмахран пӗрте тухмастӑп-ӗҫке? Епӗ хӗрсемпе выҫама анҫах кайатӑп.

*Пӑртҫкан.* Ех, аҫам, епе сана хуна йуратса калатӑп. Ман шукӑшпа санӑн ҫав ҫара ҫипуҫлӑ ушкӑнпа ҫӳреме питех килӗшмест. Асту: есӗ пуйан хӗрӗ, ҫавна ан ман.

*Йеҫук.* Анне, епир выҫатпӑр анҫах. Кайатӑп, анне?

*Пăртукан.* Кайах, еппин. Ђармастăп. (*Йеђук тухса кайма тăрсан)* Йеђук! Асту: Ваңукран айăккалларах пăрăн.

*Йеђук.* Мĕнпĕн, анне? Ваңук питĕ ырă кађђă-çке?

*Пăртукан.* Йуратмастăп епĕ сан Ваңука.

## 2-мĕш курăнни.

*Çавсемех. Йăскар (кĕрет).*

*Йăскар.* Ман килес, Пăрђкан йăмăк.

*Пăртукан.* Ах, килсем, килсем, Йăскар акай. Малалла ирт.

*Йăскар (пуççапат).* Килнĕскер иртетпĕр. Сывă-и, çўреттĕри?

*Пăртукан.* Çўретпĕр-ха хуллен. Есĕ ху лайăх-и? (*ал параççĕ*).

*Йăскар (Йеђука).* Ђупаĭ-и, хĕрĕм?

*Йеђук.* Лайăх-ха, килемей. (*ал параççе*). Анне, епĕ кайатăп.

*Пăртукан.* Кайта ђас тавăрăн.

*Йеђук.* Халех килетĕп.

*Йăскар.* Çўрех, хĕрĕм, çўрех. Сирĕн çўремесĕр камăн çўрес. Ака епир ват супнăсем çĕрнĕ кăмпа пекех: пĕр ларсан вырăнтанта тапранмастпăр. Çўрех, хĕрĕм, сирĕн çўрес пулаĭ. (*Йеђук тухса кайат*).

## 3-мĕш курăнни.

*Пăртукан. Йăскар.*

*Йăскар.* Пăрђкан йăмăк, ађа-пăђасен çўрес те пулаĭ, тетĕп. Епир хамăрта ађа ђух-

не сахалах ҫӳремен. (*сӑмсаран тапак туртат*).

П*ӑртҫкан.* Аҫа-пӑҫах пулнӑ ҫав.

Й*ӑскар.* Ах, Пӑрҫкан йӑмӑк, ӗлӗкхи пурӑнӑҫа лайӑх иртертӗмерте. Мӗн ҫухлӗ тутлӑ ҫинӗ, мӗн ҫухлӗ сӑра ӗҫнӗ, ереке йухтарнӑ. Ӗҫкӗ ҫухне ӗҫкӗре, туй ҫухне туйра. Ҫук, хальҫ ӗлӗкхи ҫухлӗ пултараймаҫҫӗ. Тепӗр тесен, хамта епӗ ӗлӗкхипе танаштарсан упӑте пек анҫах тӑрса йулнӑ.

П*ӑртҫкан.* Есӗ, акай, апла мар-ха, лар-ха—епӗ сӑра ӑсса тухам.

Й*ӑскар.* Ах, ан ҫарман, Пӑрҫкан йӑмӑк. Епӗ кӗрсе анҫах курас терӗм.

П*ӑртҫкан.* И, Йӑскар акай, епӗ ҫасах ӑсса тухатӑп. Сана пӗре тахҫанах ӗҫтерес тенӗҫҫӗ. (*витре илсе тухса кайат*).

## 4-мӗш курӑнни.

*Йӑскар (пӗтҫҫенех).*

Й*ӑскар.* Е, варманти тӑмана. Пӗре мар, ҫирӗм те ӗҫтерӗн халӗ. Пӗлетӗп епӗ сан шукӑпсепе, виттӗрех куратӑп. Хӗрна ҫасрах хӑпӑтса кӑларса ху пӗҫҫен хуҫа пулса йуласшӑн есӗ. Унтан вара упӑшка кӳртесшӗн. Ха, ватӑ кӗлетке пулсанта упӑшкапа выльаса пурӑнасшӑн. Ҫавӑ ентӗ: мантар темскерте тутарӗ. Хушӑн пулсан, кӗрик мӗн хӑтлан. Мана мӗн? Ман ӗҫес те ҫийес, ҫийӗнҫен укҫа илес. Ах. пайан пыр йарӑнаҫҫӗ-ха. Енте пехлӗтӗп. (*Урӑмра атҫисем йурлани илтӗнет*).

## 5-мӗш курӑнни.

*Йӑскар. Пӑртӡкан (кӗрет).*

*Пӑртӡкан.* Акӑ епӗ, килтӗмте.

*Йӑскар.* Ма ӡӑрманатӑнах. Ман пӗртте ӗҫес килмест.

*Пӑртӡкан.* Ай, мӗн калаҫатӑн, Йӑскар акай. Йепле вара епӗ сана хам пӳртрен хӑна тумасӑр кӑларса йарӑп?. *(Сӑра туллтарат. Малтан хӑй ӗҫет, унтан Йӑскара парат).*

*Йӑскар.* И, Пӑрӡкан йӑмӑк, кӑҫал ӗҫни... Ҫӑвар ӑшӗте шӑршланса карӗ пулӗ. Ӗҫетпӗр, ӗҫетпӗр—таҫта кайат, тепле хырӑм ӡӑтат (*ӗҫет*).

*Пӑртӡкан.* Сӑри сивӗрех пулмарӗ-ши?

*Йӑскар.* Ман хырӑм ӑна тиркемест. Ман хӑвӑлӗ асланнӑ мар-и? (*ӗҫет*) Сӑри.., питӗ тутлӑ .. пыл пекех. Тав сана, Пӑрӡкан йӑмӑк!

*Пӑртӡкан.* Тавах-ха, кӑҫал кӑтартсах та кайман-ха. Сана пӗре питӗ хытӑ ӗҫтерес тенӗӡӡӗ.

*Йӑскар.* Сисетӗп. Мӗн тумаллине туса парӑп.

*Пӑртӡкан.* Йӑскар акай, есӗ хӑҫан ман ӑша кӗрсе тухнӑ?

*Йӑскар.* Манран нимте пытараймӑн.

*Пӑртӡкан.* Ҫтаппан арӑмӗ мӗлле?

*Йӑскар.* Тирӗпе шӑмми анӡах йулнӑ. Нумайа пултараймасӗ. Ӡӗм таталнӑ.

*Пӑртӡкан.* Мӗлле ӡир унӑп?

*Йăскар.* Хĕр арăмăн телейĕ çавнашкал ĕнтĕ. Аҫана ҫипер çуратма пултараймасан... (*ĕçет*) вара етем пĕтĕмпех пăрахăçа тухаҫ.

*Пăртҫкан.* Çтаппанĕ хĕй мĕн?

*Йăскар.* Çтаппанĕ-и?

*Пăртҫкан.* Е-е...

*Йăскар.* Çтаппан вăл урăх арăм шыраҫ.

*Пăртҫкан.* Ҫăнах и?

*Йăскар.* Суймастăп.

*Пăртҫкан.* Еç-ха... Епĕ сана тахçанах пĕр сăмах калас тенĕҫҫĕ.

*Йăскар.* Калах, пĕр сăмах пулсан. Епĕ никамата калас çук.

*Пăртҫкан.* Мĕн... Çтаппан мана килĕштермĕ-ши?

*Йăскар.* Ха... Акă мĕн! Ай тăта шукăш кĕҫĕ?

*Пăртҫкан.* Темскер. Шукăш кĕҫĕ пек çав.

*Йăскар.* Мм... апла. Анҫах...

*Пăртҫкан.* Мĕн тăта?

*Йăскар.* Карт тухмасҫ.

*Пăртҫкан.* Епĕ сана ахаљ тумăп, Йăскар акай.

*Йăскар.* Ан çиллен сар, çу катса çитерсен те пулмасҫ. Ху шухăшла: есĕ тепĕр пиллĕк çултан ватăлса ларатăн. Çтаппан халех ватăлас çук. Сана урăх тупса парăп. Кама килĕштеретĕн?

*Пăртҫкан.* Çтаппан мар пулсан, мана ытти кĕрик хăшĕте йураҫ. Пуйанлăх, тепĕр тесен, хамăнта çитет.

*Йаскар.* Пĕлетĕп. Ах, тыт-ха, ĕçрĕм ĕнте. *(урамра йурлани илтĕнет).*

*Пăртӳкан* И, ĕç-ха, ĕç! Паллах пирĕн Йелуксем кĕртленсе çӳреççĕ. Ваңук çыпăçна та уйăралма та пĕлмест. Ăçта Йелук унталла. Те катӳа илесшĕн тăта хăйĕн ухмах ăсăпе?

*Йаскар.* И, Ваңук Йелука тĕлĕкре те кураймĕ. Çавах та есĕ вĕсене сыхла. Катӳăпа хĕр вăл—кушакпа çу, тенĕ. Тавара пăссан илекен пулмĕ.

*Пăртӳкан.* Епĕ те çапла шухăшлатăп çав: хĕр йатне пăсасси нимте мар, тетĕп. Ӳăнахта кайса сыхлас, пулĕ. Есĕ, акай, мана ан пăх: хăвах тултарса ĕç.

*Йаскар.* Тытах. Мана çитрĕ. Ĕнте каштах выртса канасӳĕ. Вата шăмпак мар-и? Йĕпене сиссенех туртма пуçлат.

*Пăртӳкан.* Канах, канах. Епĕ Йелука кайса шырам-ха. *(Тухса кайат).*

## 6-мĕш куранни.

*Йаскар (пĕтӳенех)*

*Йаскар.* Кайах, ара. Канма ăна епир сансăр пуççăрта пĕлетпĕр. *(Сăра тултарса ĕçет. Ĕçсе йарсан витри тĕпне пăхса)* Йакалӳĕ! *(урамра йурлани илтĕнет).* Йурлăрах, йурлăрах. Ăна епĕ те йурлатăп *(хуллен йурлат. Унтал сулкаланса тĕпел кукринӳе пĕр-иккĕ çаварнат те сак çине ӳксе çăварса кайат. Ыйăхра пĕр иккĕ йурласа илет).*

## 7-мĕш куранни.

*Йеҫук (кĕрет). Йаскар (выртат).*

*Йеҫук. (Урла пирле пахкалат).* Йепле никам та ҫук, вара? (*кайалла алака тухса пырса*) Ваҫук, Ваҫук! Ан кай, ан кай! Кĕр пӳрте, пӳртре никам та ҫук.

## 8-мĕш куранни.

*Йеҫук. Ваҫук (кĕрет), Йаскар (выртат).*

*Ваҫук.* Ҫанах никамта ҫук-и?

*Йеҫук.* Никамта.

*Ваҫук.* Тусам! (*Йеҫука ыталат).*

*Йеҫук.* Ай, намас...

*Ваҫук.* Епĕ сана йурататап...

*Йеҫук.* Ваҫук, есĕ мана манман-и?

*Ваҫук.* Аҫтан манас ман сана? Есĕ манан ҫута хĕвелĕм-ҫке.

*Йеҫук.* Ҫанах-и?

*Ваҫук.* Уйахпанта хĕвелпĕнте. (*Йаскар варанса пуҫне ҫĕклет*). Йеҫук!

*Йеҫук.* М?

*Ваҫук.* Ҫуп тутар?

*Йеҫук.* Ай! (*ваттанса Ваҫук какарĕ ҫине пуҫне тыкет).*

*Ваҫук.* Йеҫук... Йеҫук...

*Йеҫук.* (*пуҫне йерипе ҫĕклесе Ваҫука куҫран пахат*).

*Ваҫук.* (*Йеҫука тып туса хытса кайат*).

*Йаскар.* А... Епĕ мĕн, тетĕп? Вакар пярува ҫуллат, мĕн.

*Ваӈук.* (*пуҫне хӑвӑрт ҫӗклет*). Кам пур кунта? Мана темскерле сасӑ илтенҭӗ.

*Йеӆук.* Есӗ йунӑшрӑн. Пӳртре никамта ҫук. Ларар-и?

*Ваӈук.* Ларар. (*Ларҫҫӗ*). Йеӆук, есӗ хитре.

*Йеӆук.* Есӗ епӗ хитрине тин куратӑн-и?

*Ваӈук.* Тин мар. Епӗ сана пӗҭӗккӗренех йуратататӑп. Есӗ маншӑн питӗ хитре.

*Йеӆук.* Есӗте маншӑн питӗ хитре.

*Ваӈук.* Елӗк атте калаҭҫӗ: „ҫынна тӳрех кусран пӑх», теҭҫӗ,—„куҫӗ санран тарса куша-кайӑк пек пытанмасӑ, пулсан—вӑл вара сан ҫын“,—теҭҫӗ.

*Йеӆук* Ха-ха-ха! Йепле кулӑшла калаҫатӑн есӗ, Ваӈук? Ман куҫӑмсем камӑн пек тӑта?

*Ваӈук* Санӑн ҫутӑ ҫӑлтӑр пек. Епӗ кунӗнҫӗрӗн сана куҫран пӑхса ларӑттӑмҭӗ: вӗсем ҫӑл пек тарӑн (*тӗуп туса хытса кайат*) А!..

*Йеӆук.* Ваӈук, Ваӈук, мӗн пулҭӗ сана? Ҫиллентӗн-им?

*Ваӈук.* (*тӗнмест*).

*Йеӆук.* (*Ваӈука куҫӗнтӗек пӑхса*) Ваӈук, есӗ ӗсерлсе кайнӑ пек пултӑн?

*Ваӈук.* Санӑн ҫӳхе туту ӗсӗртсе йаҭӗ мана. Ех, Йеӆук! Сана ҫилленме манӑн вӑйӑм ҫитмест. Епӗ сана ака ҫапла ал ҫине ҫӗклӗттӗм те пӗтӗм тӗнҭене кӑтартӑттӑм: „ҫакӑ манӑн!“ тейӗттӗм. Ах, савнӑ Йеӆук, питӗ хытӑ йуратататӑп ҫке епӗ сана!

*Йеӆук.* Хӑҫҫан каҭҭа илӗн есӗ мана?

*Ваӈук.* Хӑҫҫан? Кӗҫӗрех! Пӗлтӗн-и?

*Йеҫук.* Кӗҫӗрех ытла хӑвӑрт. Епӗ хатӗрленмен.

*Ваҫук.* Мӗн хатӗрленмелли пур? Пур пӗр сана апу туй туса каҫҫа парас ҫук мана. Вӑрттӑн тухас пулать.

*Йеҫук.* Ҫӑнахта, мана анне сана каҫҫа парас ҫук. Йурӗ. Хӗр вӑрланӑ тӑвӑпӑр. Анҫах, хӑҫан тухас? Кӗҫӗрех ытла хӑвӑрт мар-и?

*Ваҫук.* Кӗҫӗрех, ҫунӑм, кӗҫӗрех.

*Йеҫук. (Ваҫука ыталаса илет).* Йурӗ апла пулсан.

## 9-мӗш курӑнни.

*Йаскар. Йеҫукпа Ваҫук. Пӑртҫкан, ун хыҫҫан Ҫтаппан тӑта Муҫҫа кӗреҫҫӗ.*

*(Йеҫукпа Ваҫук пӗр пӗринтҫен хӑвӑрт уйӑрлаҫҫӗ. Йеҫук намӑслӑнса питне саппунпа хуплать. Ваҫук пуҫне ҫӗклесе, мӗн пуласси не кӗтсе тӑрать. Ҫтаппан алӑкран кӗрсен унтах тӑрать. Йаскар тӑрса ларать, сӑмсаран тапак туртать. Муҫҫа унта-кунта ҫавӑрӑнкаласа сӗтел ҫывӑхне пырать, сӑра витри ҫине ӑшшӑн пӑхма пуҫлать. Йаскар Йеҫуки хӗнеме пуҫлать).*

*Йаскар.* Есӗ каҫҫӑпа-и? Есӗ каҫҫӑпа-и? Ах, лиска йытӑ! Акӑ сана, акӑ сана!

*Йеҫук.* Ай, ан ҫап анне!

*Йаскар.* Ап-ҫӑхху! Ап-ҫӑх!

*Муҫҫа.* Айуй! Ман тапак пыракки те кунта, тем?

*Йăскар.* Есĕ тăта мĕн шыраса çӳретĕн, тапак пыракĕн хупăлђђийĕ?

*Ваңук.* Пăрђкан акай, ан тив есĕ Йелђука.

*Пăртђкан.* Сана тăта мĕн кирлĕ? Есĕ унăн упăшки-им?

*Йелђук.* Анне, ан йатлаç есĕ Ваннђука...

*Пăртђкан.* Тăта кирли? Ах, суђка! Йепле вĕсем пĕр пĕрин хутне кĕреççĕ.

*Ваңук.* Пăрђкан акай, ан тив Йелђука. Епĕ ăна кађђа илетĕп. *(Пăртђканран хуллине туртса илет те ывăтса йарат).*

*Пăртђкан.* А, есĕ унăн хутне кĕретĕн-и? Ђим, епĕ сана кађђа илтерем *(тĕпелтен туртђăка илсе Ваңука тутаран тĕкме тăрат).* Тухса кай ман пӳртрен, тухса кай! Тухса кай!

*Йăскар.* Пăрђкан йамăк, асту!

*Муçча.* Пăрђкан йамăк, çатма аврине пăрахах! *(Муççапа Йăскар Пăртђканран çатма аврине туртса илеççĕ)*

*Пăртђкан.* Ах, Турă, вĕсем пурте мана хирĕç! Ах турă! Çтаппан ывăлсем, Çтаппан ывăлсем! Хурах! Хурах! *(уласа макăрса йарат).*

*Çтаппан. (урай варне паттăр пек йăвăрăн утса тухат.)* Ваңук! Кай тухса!

*Ваңук.* Хуллен!

*Çтаппан.* Кай тухса! Унсăрăн епĕ сана халех кантăр тыллана пек хуçкаласа пăрахăп.

*Муçча.* Ваңук ывăлăм кайах есĕ, кайах, çапăçу пулĕ, кайах.

*Ваңук. (Çтаппана пӳрнипе йунаса)* Ей, халăх йунне ĕçекен вăрăм туна! Асту! Епĕ

ҫакӑ пӳртре сан ҫине ал хурса алла та вараламастӑп, анҫах ирӗкре тӗл пулсан, санпа кӗрешме хатӗр. Акӑ ҫакӑ ҫӑмӑр сан пуҫран тивсен—йе пуҫу саланса кайӗ, йе ӗмӗрлӗхе сӗрӗм тивсе йулӗ!

*Ҫтаппан.* Ну!.. *(ҫанма аллине ҫӗклет).*

*Ваҫук.* Ан тапран вырантан!

*Пӑртҫкан.* Тухса кай ман пӳртрен, тухса кай! *(Йеҫука)* Есӗ те тухса хӑп!

*Ваҫук.* Кайӑпӑр, кайас пулсан. Анҫах епӗ кунтан пӗҫҫен каймастӑп. Айта, Йеҫук, пӗрле, ҫӑнахта епир ҫака пӳртрен тухса кайӑпӑр

*Йеҫук.* Ӑҫта кайӑпар, Ваҫук? *(Ваҫук ҫумне пырса тӑрат)*

*Ваҫук.* Ман пата. Пур пӗр, иксӗмӗр пӗр мӑшӑр пулас пулат.

*Пӑртҫкан.* А-ах, шуйтансем! Пӗтерҫӗҫ! *(хуллен йӗрет).*

*Йӑскар.* Апла мар-ха, Ваҫук шӑлӑм! Апла йал кулат. Епир акӑ ҫапла тӑвӑпӑр: есӗ, хӗрӗм, венҫетҫен ман патӑмра пурӑн, кайран вара Ваҫук пӳртне сана туйпа усатӑпӑр.

*Муҫҫа.* Ха, ӗнте епӗте хӗр паратӑп. Ай ҫун, май ҫун—манӑн варли лутра хуран!

*Йӑскар.* Кайӑпӑр, аҫасем. Йапалисене кайранта илсе кайӑпӑр.

*Пӑртҫкан.* Тухса хӑпӑрах, вӑрӑ хурахсем! Мана сирӗн йапалусем кирлӗ мар. Найӑр, халех сӗтӗрсе кайӑр! *(Йеҫук сӑхманӗсене, ҫитарӗсене илсе перет).*

*Ваҫук.* Айта, Йеҫук!

*Йеҫук.* Сывӑ пул, ҫуратнӑ кил ҫурт!

*Пӑртҫкан.* Кайӑрах, пӗтӗр, ҫӗр айӗнех путӑр! (*Ваҫукпа Йеҫук, вӗсен хыҫӗнтҫен Йаскарпа Муҫҫа тухса кайаҫҫӗ. Муҫҫа алӑкран кайалла ҫавӑрӑнса кӗрет*)

## 10-мӗш курӑнни.

*Пӑртҫкан. Ҫтаппан. Муҫҫа.*

*Пӑртҫкан* Ах, мӗн турӗҫ мана ку вӑрӑ хурахсем.

*Муҫҫа.* Ман кунта калпак йулнӑ пулас. (*Калпаккине шыранӑ тҫух тҫӑтаймасӑр витре ҫине пӗре ӑшшӑн пӑхса илет*).

*Пӑртҫкан.* Ех, Муҫҫа хырӑмӗ, Муҫҫа хырӑмӗ!

*Муҫҫа.* А, хырӑмӗ ӗнте вӑл ман ҫаплах. Ан йатлах ӗнте Пӑрҫкан йӑмӑк, ҫӑрмантартӑмӑр.

*Ҫтаппан.* Муҫҫа! Тепре шӑл шуррине уҫатӑн пулсан, халех кӑларса пӗретӗп.

*Муҫҫа.* Е, епӗ хамах кайатӑп, Ҫтаппан шӑлӑм, хамах кайатӑп.

*Ҫтаппан.* (*Муҫҫа тухса кайнӑ тҫух сылтӑм аллине сулахай ывӑҫ тупанне ҫапать*) Ҫшст! (*Муҫҫа тухса кайать*).

## 11-мӗш курӑнни.

*Пӑртҫкан. Ҫтаппан. (урай тӑрах хытӑ утса ҫӳрет).*

*Ҫтаппан.* Пӗре пурнете кӑларса перес, терӗм те тӑта кӑштах тӑхтас, терӗм, хам пӳртре мар, терӗм.

*Пăртȩкан.* Ах, ма кăларса пемерĕнех вĕсене? Кăларсах перес пулаȩȩĕ вĕсене.

*Çтаппан.* Ан куȩȩан, кирлĕ пулсан, епĕ вĕсене кайранта тытса хĕнеме пултаратăп.

*Пăртȩкан.* Ах, Çтаппан ывăлсем, тытса хĕне вĕсене, тархасшăн. Ваȩукне пуçне çапса шăтар, Йăскарне кутĕнȩен тап, Муççине тăта тытса силлесен те çитĕ. *(Çывăхарах пырса)* Епĕ сана уншăн пулăштух ĕçтерĕп.

*Çтаппан.* Пулăштуха йăна епир хамăрта тупăпăр, а санăн... *(çывăхарах пырат)* ман валли... кăшт тутлăраххи пулмалла, а?..

*Пăртȩкан.* *(пĕлмен пек пулса)* Мĕн-ши вăл тутлăраххи?

*Çтаппан.* Ака çакă *(Пăртȩкана йăрса тытат)*.

*Пăртȩкан.* *(вĕçерĕнсе тухат)* Ай... *(Çтаппана йунат)* Йурамаст!

*Çтаппан.* Мĕншĕн? Есĕ ман кăмăла питĕ кайатăн, кăштах выȩаса пăхма йурĕçке?

*Пăртȩкан.* Выȩама? Епĕ сан валли выȩама кушак çури мар-ĕçке? Намăса ăçта хурас? Епĕ ĕнте тин хĕр мар, ватăлна.

*Çтаппан.* Е, намăс вăл тĕтĕм мар, куçа çимест. Ватти çамрăккине епĕ питех уйăмастăп. Çамрăк хĕрсем вĕсем пиççе çитмен çырла пек анȩах. Есĕ ȩăмăр, çемçе, çавăнпа сана ȩуптумата авантарах пулмалла...

*Пăртȩкан.* Санăн ȩуптума хăвăн арăму пур-та?

*Çтаппан*. Ех, арăм!.. Ман ăна курсан хăсас килет.

*Пăртъкан*. Ха-ха ха! Ан култарах. Анђах ман упăшка вилни виçĕ çул Çав виçĕ çул хушшинђе епĕ выљама мар. вăл шухăша пуç-рата тытман (*айăкалла*). Ах, ђĕре сиксех ту-хаŤ, мĕн тăвас?

*Çтаппан* Тытман пулсан, хаљ тытма та кайах мар.. Тытманни вăл тата лайахрах..

*Пăртъкан*. (*шăппăн*) Çынсем пелсен?.. а?. Намăс?..

*Çтаппан*. Кунта никамта çук, урамра теттĕм.

*Пăртъкан*. Ђăнахта кунта никамта çук... теттĕм... Ах, мĕлле çын есĕ?..

*Çтаппан*. Ан шарла... (*Пăртъкана йарса тытат*).

*Ђаршав*.

# ИККӖМӖШ ПАЙӖ.

(Ваҫук пӳрҫӗ).

## 1-мӗш куранни.

*Йеҫук (сапка сиктерет).*

*Йеҫук (йурлат).*

| 7 6 5 · | 7 6 7 · |
|---|---|
| Ня-ни-не | ту-ни-не |
| А-ҫи-не | у-ри-не— |

| 5 3 5 2 | 5 3 5 · |
|---|---|
| Таппи - таппи | сӳреме, |
| Кӑрӑс кӑрӑс | тутарма... |

(*Малалла та ҫав кӗвӗпех*).

Амӑшне пуҫне,
Аҫине ҫунатне—
Вӑштӑн-вӑштӑн вӗҫтерме,
Лӑпӑш-лӑпӑш сиктерме...

## 2-мӗш куранни.

*Йеҫук. Ваҫук (кӗрет).*

*Ваҫук.* Тулта шӑкӑртах пуҫтартӑм. Енте ирхи апат ҫимете йурать. Йеҫук, хатӗрле апат. Аҫине унҫен епӗ хамта сиктерӗп.

*Йеҫук.* Йурӗ, Ваҫук, пӑхха: вӑл пӗртӗе ҫывӑрмасть, куҫне уҫнӑта пӑхса выртать.

*Ваӊук.* Ӑҫта-ха вӑл? (*Ваӊукпа Йеӆук икĕшĕ сӑпка ӑшне пĕшкĕнсе пӑхаҫҫĕ*). Ха, ҭӑпах: йепле вӑл ҭӑрлаттарса пӑхса выртаҭ. А, Йеӆук, есĕ апат хатĕрле-ха, хатĕрле.

*Йеӆук.* Халех. Апаҭете нимте ҫукта, мĕнех хатĕрлес-ши?

*Ваӊук.* Кӑвас пĕтни-ха, вара?

*Йеӆук.* Пур кӑштах.

*Ваӊук.* Кӑвас ҫине сухан йар. А ку шӑхлиҭи валли каҭака суса кĕр. Вара ҫитрĕте пире.

*Йеӆук.* Йурĕ. Ҫапла тӑвӑпӑр (*каҭака сума тухса кайаҭ*).

*Ваӊук.* (*аҭине*) Мĕн туса выртатӑн-ха есĕ, улпут? Ха, аллисене ҭӑсаҭ, тӑта. Маттур, маттур. Ҫывӑрах, ывӑлӑм, ҫывӑрах.

## 4-мĕш курӑнни.

*Ваӊук. Пӑрҭкан* (*кĕрет*).

*Пӑрҭкан.* Ман килес, ан йатлӑр. Пурӑнаҫҫи?

*Ваӊук.* Вилме шукӑшламан-ха. Ху мĕлле пурӑнатӑн?

*Пӑрҭкан.* Пурӑнкалас пуӆаҭ ирĕксĕр, мĕн тӑвас тетĕн?

*Ваӊук.* (*пуҫне ҫĕклет*). Мĕлле ирĕксĕр? Пуҫна ма ҫыхрӑн?

*Пӑрҭкан.* Ах, ан калах, Ваӊук. Ҫтаппан ҫапса шӑтарҭĕ.

*Ваӊук.* Ехе. Тыткалама пĕлет пулас, мур, пĕре алла лексен. Астӑватни, пĕре сан пӳртре мана тытса хĕнеме тӑҭĕ? Анҭах ури ҭĕтрерĕ

пулмалла—çыхланмарĕ. Çавах епĕ ăна маттур пулĕ, тесе шукăшлатăп.

*Пăртḑкан.* Мĕн пулнине каçарах, Ваḑук кĕрӳ. Мана, ухмах хĕр-арăма, улталарĕ вăл, усал. Ман пĕтĕм пуйанлăха хĕй аллине пуçтарса илḑĕ.

*Ваḑук.* Антив, ăна пуйанлăх ḑăрмантарас çук. Арăмĕ ĕçлемесĕ, тарăç тытас пулаĭ.

*Пăртḑкан.* И, арăмне çаплах çĕмĕрет. Вырăнтан тăмата памасĭ. Кăшт ура çине тăрса çӳреме пуçласанах хĕнеме тытăнаĭ.

*Ваḑук.* Ха. упа хăраххи.

*Пăртḑкан.* Кайас пуḑ.

*Ваḑук.* Ма лармастăн?

*Пăртḑкан.* Çтаппана шыратăпта... Сирĕн пата килсе ларман-ши, терĕм, çавăнпа килсе пăхас, терĕм.

*Ваḑук.* Çук. Çтаппан пирĕн пата килмен. Мăнма кунта килес унăн?

*Пăртḑкан.* Йеḑук пуçне çавăратăп, тесе мухтанаĭ, тет.

*Ваḑук.* Ха-ха-ха! Çавăрттарăп епĕ ăна лайăх пĕре, йарса илсен.

*Пăртḑкан.* Тен, хăвăн салтака каймалла пулсан, йытăланĕте вăл, ăна никамта ḑараймĕ. (*Ку сăмахсене каланă тḑух Йеḑук алăкран кĕрет*).

## 5-мĕш курăнни.

*Ваḑук. Пăртḑкан. Йеḑук.*

*Йеḑук.* Аḑи çывăрати?

*Ваḑук.* Çывăраĭ.

*Йеҙук.* Анне, мĕлле салтака каймалла пулсан, тетĕн есĕ?

*Пăртҗкан.* Пайан кантурсем килнĕ. Ваҥукпа тансене ҙĕнеççĕ, тет.

*Ваҥук.* Килсе ҙĕнмен хаљ, унҙен апат çийер.

*Пăртҗкан.* Кайас-ха, сывă пулăр.

*Йеҙук.* Анне, апат çиме йул.

*Ваҥук.* Апат çиме лар. Çитĕ ĕнтĕ, малашне пĕр пĕрне çилленмéсĕр пурăнăпăр.

*Пăртҗкан.* Ларса сийесим апла?

*Ваҥукпа Йеҙук.* Ларса çи. Ларса çи.

*Йеҙук.* Çимесĕр. (*Апат çиме лараççĕ. Йеҙук çимесĕр Ваҥук çине пăхса ларат*).

*Ваҥук.* Ма çиместĕн есĕ?

*Йеҙук.* Сапа салтака илсе кайасран хăратăп.

*Ваҥук.* Ан хăра, епир кайсан вăрçиге пĕтет.

*Пăртҗкан.* Пĕттĕрҙĕ вăл, вăрçи. Вара кайсанта пуç пĕтмĕҙҙĕ. (*шаккаççĕ*).

*Сасă.* Килте-и?

*Ваҥук.* (*тăрса тҗӳретҗерен пăхат*). Килте. Кăм вăл? Çытăр муҙей, есĕ мар-и?

*Сасă.* Епĕ.

*Ваҥук.* Кĕр пӳрте.

*Сасă.* Кĕресте пулĕ.

*Йеҙук.* Ваҥук, мĕншĕн килнĕ вăл?

*Ваҥук.* (*шухăша кайса*) Темме...

*Йеҙук.* Ах турă, старăстă!... (*Пӳрте сĕтел хушшинтҗен тухаççĕ. Пăртҗкан апат пуçтарма тытăнат.*

## 6-мёш курăнни

*Йеђук. Ваңук. Пăртђкан. Старăстă (кёрет).*

*Старăстă.* Ман кэлес, вăй патăр.

*Ваңук.* Килех, маларах ирт.

*Старăстă.* (*ал парат*) Лайăх пурăнассн, ушкăнпе?

*Ваңук.* Тавта пуç! Пурăнатпăр-ха хуллен. Ху лайахи?

*Старăстă.* Çӳретпĕр. Пирĕн ĕçĕ çавнашкалта...

*Йеђук.* Мĕн тăта?

*Старăстă.* Çавнашкал ĕнте. Пайан кантура кайас пулат, ыран прийума...

*Йеђук.* (*йĕрет*) Ах...

*Ваңук.* Йеђук, ан макăр-ха, тархасшăн... (*сăпка çине кăтартса*) Авă сан... выртат. Есĕ çавна пăх... Епир ĕнте... карăмăр... (*питне алипе хуплат. Урамра салтак йурри илтĕнет. Йурлакансем Ваңук пӳртђĕ çумнелле килеççĕ.*

*Старăстă.* Ана ĕнте, Ваңук шăлăм, макарсата нимте тăвас çук. Есĕ çаплата... Ну, епĕ кайам-ха... Ман тăта ик-виç çĕре çитес пулат. Сывă пулăр. (*тухса кайат*)

*Ваңук.* Сывă пул, муђей! (*Урамра: «Тпру!»*)

## 7-мĕш курăнни.

*Ваңук. Йеђук. Пăртђкан. Салтак атђисем (кĕреççĕ).*

*Салтак атђисем.* Сывă-и, ушкăнпе?

*Ваҥук.* Сывах-ха, йулташсем! Йеҍук сăра тултар.

*Паҍҍа.* Сăрапа тăрса нумай пулаť, Ваҥук. Епир кайма тухнă. Сана лартса кайас, терĕмĕр.

*Ваҥук.* Йепле ман пўртрен виç курка ĕçмесĕрех тухăпăр?

(*Йеҍук Ваҥука сăра тултарса параť. Ваҥук ĕçетте тăта тултарса салтак аҭисене ĕçтерет*).

*Салтак аҭисем* (*йурлаççе*):

1. Çăлтăр виттĕр çул курнаť (2)
   Епир кайас çул пуљ çав (2).
2. Уйăх виттĕр çул курнаť (2)
   Епир çўрес çул пуљ çав (2).

*Ваҥук.* Ан макăр-ха, Йеҍук ҭунăм. Кантур инҭех мар, каçҭен кайса килĕпĕр...

*Паҍҍа.* Ăрахмат ырă хуçасене. Ĕçрĕмĕр, хăна пултăмăр, ĕнте кайаста пулаť.

*Ваҥук.* Кайăпăр. Йеҍук, тумтир пар...

*Йеҍук.* (*сахманпа картус параť*). Ваҥук... ҭасрах тавăрăн...

*Ваҥук.* Ех, карăмăр! (*Ваҥук салтак аҭисемпе пĕрле ыталанса йурласа тухса кайаť*).

1. Мăн çул урлă каçнă ҭух (2)
   Йаштак хурăн хуçăлҭĕ,
   Симĕс çулçи тăкăнҭĕ.
2. Тăвансенҭен уйăрăлнă ҭух (2)
   Йаштак пĕвĕм авăнҭĕ,

Çемçе кăмăл хуçăлтĕ. (*тухса кайаççĕ*). *Йелук ăсатма хыççăн тухат*. *Пăртукан сăпка патĕнте*).

## 8-мĕш курăнни.

*Пăртукан*. (*Урамра Палла сасси*: „Ей, малти!“ *Хункăрма сасси илтĕнми пулат*. *Йелук макăрса кĕрет*).

*Йелук*. Карĕç!..

*Пăртукан*. Макăрсата ним тăвас çук.

*Йелук*. Сана апла калама нимте мар. Ман мĕлле тăтас?

*Пăртукан*. Епĕ кайам-ха. Сыв пул. Ан макăр. Макăрсата ним тăвас çук (*тухса кайат*).

*Йелук*, Сыв пул.

## 9-мĕш курăнни.

*Йелук* (*пĕттенех*).

*Йелук*. Тĕре пасăрах сисрĕ. Турă çавăрса килтĕрех. Пĕтен пулсан тăта тепĕр майлăттĕ. (*сăпка çине пăхса*). Çакăншăн тун хăрат (*сăпка йуррине хуллен йурлат*).

Нянине тунине,
Атине урине...

Йумăç йарам-ха, мĕн тухат (*çаттмаври тăрăшне аллипе тытса сăват*) Пĕрре... иккĕ.. виççĕ... тăваттă... пиллĕк...ултă... çиттĕ... Ах, ырă пулас çук! (*алăкран шаккаççĕ*) Кам вăл?

## 10-мĕш куранни.

*Йеђук. Çтаппан.*

*Çтаппан* (*алăкра*) Кĕме йурати? (*кĕрет*)

*Йеђук.* Ваңуксем карĕç...

*Çтаппан.* Килнĕ килменех ан хăвачасам. Куртăм кайнине. Çавăнпа сана хĕрхенсе кĕтĕм.

*Йеђук.* Мана хĕрхенекен сансăрах пур.

*Çтаппан.* Сăмахсем хăватлă. Епĕ унпеккине йуратап.

*Йеђук.* Мĕн кирлĕ сана?

*Çтаппан.* Ан йатла, Йеђук. Нимĕнте кирлĕ мар. Сана анђах кĕрсе курас терĕм.

*Йеђук.* Есĕ ĕссĕр!

*Çтаппан.* Пулĕте пулĕ. Анђах ĕçнĕшĕн айăп тăвăни есĕ мана?

*Йеђук.* Санпа калаçса тăма ман кăмăлăм çук. Кала мĕн кирлине?

*Çтаппан.* Лăплан, лăплан, Йеђук. Мана ытлашши нимĕнте кирлĕ мар. (*атђăш сасăпа*) Ех, Йеђук! Ниçта пырсанта епĕ хам валли канăçлăх тупаймастăп. Есĕ хĕр ђухне сана курсан манăн ђун хĕпĕртеђђĕ. Халĕ сана çын арăмĕ вырăнђе куратăпга ман ăш çурăлсах тухаt.

*Йеђук.* Ей, пӳгсĕр ултавçă! Таван арăмна хĕне кӳртсе йатăн, ман аннене çыпăçса ăна намăс кăтартрăн. Çитĕ сана, мана ан тив. Пăрах хăвăн ĕссĕр шукăшусене.

*Ҫтаппан.* Епӗ ӗссӗр мар, Йеҕук, ӗҫнӗ пулсанта ӗссӗр мар. Ман пуҫ урӑ ҕухнехинҕенте урарах. Епӗ хам кӑкӑра акӑ ҫапла уҫса кӑтартма пултарсан, есӗ мана кӑштахта пулсан хӗрхенеттӗнҕӗ. Есӗ калатӑн: «арӑму», тетӗн,—„анне», тетӗн. Ман арӑм ман каҕҕӑ ӗмӗрне типӗтрӗ. Хӗне карӗте кӑмӑлӗ пӑсӑлса карӗ. Вара пӑҕӑкӑпа сӗрнӗ пек вӑрҫма пуҫларӗ. Мӗншӗн епӗ айӑплӑ вӑл хӗне кайнӑшӑн? Вара пуранӑҫ ӑнман пирки епӗ хам килтен хам сивӗнтӗм. Сан апу ҫумнете ҫавӑнпа пырса ҫыхлантӑм. Ку вара тӑта арӑмранта усалтарах пулҕӗ. *Х*ӑй ватӑ пирки тытӑнҕӗ вара кӗвӗҫме, айӑккалла пӑхмата памасӑ, кӗвӗҫет. Есӗ, тет, мӗн куҫна ҕаркаласа пыратӑн, тет, мӑнтӑр хӗрсене шыратӑн-им? тет. Кайрантан кайран ҫут ҫанталӑкшӑн кӗвӗҫме пуҫларӗ. „Мӗн тек урамалла пӑхатӑн“, тет. Вара ҕун тӑвӑрланса ҫитрӗте ҕӑтаймарӑм—тухса тартӑм санӑн апу патӗнҕен. Вара ман ҕӗре тӑта ытларах суранланса карӗ. Ҫав тӗлех пӗре сана ҕиркӳре турра кӗл-тунине куртӑм. Есӗ мана турӑн таса анкӗлӗ пек курӑнса карӑн. Ҫавӑнтан пуҫласа есӗ ман ҕӗрене амӑрт кайӑк ҕӗрнисемпе ҕавса илнӗ (*аллипе туса* кӑ*тартна*ӑ) пек кӗрсе лартӑн. Йуратӑтӑни есӗ мана?

*Йеҕук.* Есӗ хӑрушӑ етем. Сан сӑмаххусене итлесе сивӗсӗр шӑнса каймалла. Епир ҫакӑ наҕар пӳртрете телейлӗ пурӑнатпӑр. Упӑшка мана йуратаӑ, манӑн сӑпкара пӗҕӗкҫеҫҫӗ аҕа выртаӑ—пурӑнӑҫ нимренте кайах

мар. Есӗ хӑвӑн телейна халиҫен тупаймарӑн пулсан—ҫакӑнта ан шыра. Кайах хӑвӑн ҫулпа—пулӗ ӑҫтата пулсан сан валли те тӳпе.

*Ҫтаппан (ҫупса пырать)* А, кӑмӑлпа йуратмастӑн пулсан—епӗ сана вӑйпа илӗп.

*Йеҫук.* Ах! *(сӑпка хыҫне тӑрса ӳкет)* Мана илес тесен сӑпкана ҫӗмӗрсе ман аҫа урлӑ пусса каҫ!

*Ҫтаппан. (ҫаpӑнса пуҫне икӗ аллине хӗстерсе тытать)* Мӗн турӑм епӗ? Каҫар мана тархасшӑн, Йеҫук!

*Йеҫук (алӑк патнелле кӑтартса)* Тухса кай. ҫылӑхла ҫун!

*Ҫтаппан.* Каҫар, Йеҫук, каҫар *(ҫӗркуҫҫи ҫине тӑрать. Урамран салтак йурри илтӗнме пуҫлать).*

*Йеҫук.* Тухса кай ҫасрах! Халех тухса каймасан сана Ваҫук килсен йытта вӗлерне пек вӗлерӗ.

*Ҫтаппан.* Вӗлертӗр! Есӗ каҫармасӑр епӗ вырантан тапранмастӑп! *(Урамра хункӑрма сасси тӑта Паҫҫа сасси:* «Тпру»!)

*Йеҫук. (ӑнтан кайса Ҫтаппан патне тышкине ҫамӑрласа ҫупса пырать)* Тухса кай ҫасрах, шуйтан! Есӗ мана пӗтересшӗн-и? *(Ваҫук керессрен хӑраса алӑка ҫаклатса ларать Ҫтаппан тухса тарма алак патне ҫупса пырать. Тултан шаккаҫҫӗ. Ваҫук сасси:* «Йеҫук, уҫ, еппр тавӑрӑнтамӑр!» *Ҫтаппан хӑраса кайалла ҫакать. Йеҫук ҫупса пырса ҫӳреҫе уҫать, Ҫтаппана тухса кайма кӑтар-*

*тат. Ҫтаппан ԏӳреԏе виттӗр тухса сикет.* **Ваӊук** *тултан тӑтах шаккат*: «Йӗԓук, уҫ! Илтместӗн-им есӗ? Уҫ!» (*Йеԓук уҫат*).

## 11-мӗш курӑнни.

*Йеԓук. Ваӊукпа салтак аԏисем кӗреҫҫӗ.*

**Ваӊук.** Мӗншӗн ԏас уҫмарӑн?

*Йеԓук* (*хараса*) Ваӊук!..

*Ваӊук* (*пулханса*) Йеԓук, мӗн пулԏӗ, санӑ? Есӗ ԏӗтретӗн? Куҫсем санӑн саланса кайнӑ? Есӗ хута шап шурӑ шуралса кайнӑ?

*Йеԓук* Ах, Ваӊук...

*Ваӊук.* Мӗн пулԏӗ, кала ԏасрах! Есӗ мана уртарса йаратӑн! (*ԏӳреԏе уҫҫине курса*) Ку ԏӳреԏе мӗншӗн уҫӑ? (*пӗлсе*). А, сан пата ҫын килнӗ-и? Кала тӳррипе, унсӑрӑн пур пӗр ԏунна кӑларса илӗп!

*Йеԓук.* (*ԏӗркуҫланса*) Ԏунтан вартан йуратнӑ Ваӊук, каҫар мана, епӗ айӑплӑ мар.

**Ваӊук.** Мӗн тӑта, кала ԏасрах.

*Йеԓук.* Есир тухса кайсанах епӗ аԏа ҫӑвратма хатӗрлентӗм.

**Ваӊук.** Ну?

*Йеԓук.* Ҫав вӑхӑтра Ҫтаппан килсе кӗԏӗ те мана пусмӑрлама тытӑнԏӗ.

**Ваӊук.** (*аллипе пуҫне, тытат. Сывлӑша туртса илсе ухмаха йернӗ пек кулса йарат, унтан арасланӑ пек вӑйлӑн кӑшкӑрса калат*) Ӑҫта вӑл хаԓ? Парӑр мана ӑна ҫакӑнта! Ӑҫта вӑл, ӑҫта-а?

*Йелук.* Есӗ вӗлересрен хӑраса епӗ ӑна ҫӳреҫе виттӗр кӑларса йатӑм. Ҫавӑнпа вӑл тухса сикеҫҫен епӗ алака уҫмарӑм.

**Ваҫук.** (*Йелука ҫапма аллине ҫӗклет*) Есӗ те мана улталас тетӗни, йытӑ-ами? (*Ваҫука аллинҫен тытса ҫараҫҫӗ. Ваҫук ҫемӗҫҫе кайса сак ҫине кайса ӳкет. Йелук ун ҫине ҫупса пырса ӳкет*).

*Йелук.* Епӗ айӑплӑ мар, Ваҫук, каҫар мана!

*Ваҫук.* (*хуллен, ҫемҫе сасӑпа*). Тупса килӗр кунта Ҫтаппана, тархасшӑн тупса килӗр, ман ӑна курас килет.

*Паҫҫа.* Айтӑр ӑна тытса килетпӗр!

*Салтак аҫисем.* Айтӑр, айтӑр! (*тухса кайаҫҫӗ*)

## 12-мӗш курӑнни.

*Йеҫук. Ваҫук* (*тӑрса ларать*).

**Ваҫук.** (*тӑрса ларать*) Йелук! Пӑх мана куҫран. Ҫӑн калатӑн-и йе суйатӑн-и?

*Йелук.* Ҫӑн калатӑп, Ваҫук. Вӑл мана пусмӑрлама килҫӗ. Вара хӑйӗн ӗссӗр пуҫӗпе тӗрлӗ кирлӗ мара лепӗртетсе ларҫӗ. Ларҫӗте мана ҫыпӑҫма тытӑнҫӗ, вара. Вӑл ман патал-ла ура йарса пуссанах епӗ сӑпка хыҫне тарса ӳкрӗм. Вара: „малтан ман аҫана вӗлер,“ терӗм,—„вара сӑпка урлӑ пусса каҫса мана тин тыт,“ терӗм.

*Ваҫук.* Халавлă пултăр санăн таса ăрăву, Йеҫук. Санăн сăмахху тĕрĕс, епĕ ăна сан куҫăнта тĕкĕр виттĕр курнă пек куратăп.

*Йеҫук.* Ҫăн ҫапла, Ваҫук. Есĕ ĕнте мана ҫилленместĕн-и, Ваҫук?

*Ваҫук.* Ăҫтан ҫиллenес ман сана? Есĕ ҫăн каларăн... Темме ăш ҫунат манăн, ҫасрах шыв парҫҫĕ, кăштахта пулин ҫăвар ăшне йĕпетесҫĕ.

*Йеҫук.* (*сăра парат*) Паҫăрхи сăра пур, акă ĕҫ.

*Ваҫук.* (*ĕҫет*) Тăта пар.

*Йеҫук.* Пĕтĕмпех ĕҫ.

*Ваҫук.* (*тăта ĕҫет*). Ĕнте ăш канҫĕ. Ну, ĕнте, шуйтан, сана кĕл тутармаллăх хатĕрлерĕм. (*Тултан сасăсем илтĕнеҫҫĕ*: «Ан йул! Айта!» *Салтак атҫисем Ҫтаппана икĕ аллинтҫен тытса кĕреҫҫĕ*.).

## 13-мĕш курăнни.

*Йеҫук. Ваҫук. Ҫтаппанпа салтак атҫисем.*

*Паҫҫа.* Акă, хаҫхи упана тытрăмăр.

*Ваҫук.* (*мăшкăласа*). Кил, кил, Ҫтаппан. Мăнма есĕ пирĕн хушăмăра килесшĕн мар? Йе пирĕнпе хутшăнма йĕрĕнетĕн-и? Ай, ҫын арăмсене ҫуп тума анҫах лайăх-и?

*Ҫтаппан.* Каҫар мана, ырă Ваҫук! (*тҫĕркуҫланат*).

*Ваҫук.* (*аслати пек кăшкăрса йарат*) А-ы, есĕ каҫар? Есĕ каҫари? (*Ҫтаппан патне тҫупса пырса урипе питĕнтҫен тапма тăрат. Ҫтаппан ура ҫине сиксе тăрат*. Ваҫук *Ҫтаппана*

*пырса* çапаť, *ăна йулташĕсем тытса ђараççе. Йеђук аťине тытаť*).

*Çтаппан.* Каçар, Ваңук! Епĕ ĕссĕр пулнă...

*Ваңук.* Ĕссĕр!.. Сана хăвăн арăму çитместь, мăнтăр! Тăлăх арăмсемпе путсĕрленсе çӳрерĕнте тăта ман вырăна килсе вараласа кайас терĕни? Акă сана! Акă сана!..

*Пађђа.* Çитĕ ĕнте, Ваңук, ђарăн.

## 14-мĕш курăнни.

*Çавсемех.* Йаскар (*ђупса керĕт*).

*Йăскар.* Çтаппан кунта-и? (*Çтаппана курса*) Çтаппан, айта ђасрах килђна, арăму вилсе карĕ.

*Ваңук.* Акă сана тепре арăмушăн.

*Çтаппан.* Ан тив, Ваңук, йăвăр суран ан ту.

*Ваңук.* А-ы, йăвăр суран? Ђунна кăларса илем епĕ санне! Ђхву! Шуйтан аçи, тепĕр тесен... Намăссăр çын, тухса çухал ман куçăмран!.. (*Çтаппан тухса кайаť*).

*Салтак аťисем.* Ха-ха-ха! Тупрĕ хăйĕн валли!

## 15-мĕш курăнни.

*Йеђук. Ваңук. Салтак аťисем.*

*Ваңук.* Ех, ĕмĕр сакки, мĕнпĕн есĕ питĕ сарлака... (*йĕрсе йарать*).

*Йеђук.* Ан макăр, Ваңук.

*Ваңук.* Çук. Епĕ макăрмастăп. Ех, кала, Митри, купăсна! (*Митри купăс калама ты-*

*тӑнат.*) Йарӑр ташша! (*Иккӗн тухса ташлаççӗ. Йеҙук аҭиче сӑнкана хураҭ те салтак аҭисене сӑра ӗçтерет. Сӑра еçнӗ ҭух ташлакансем ҭарӑнаççӗ*).

*Паҙҙа.* Çитӗ, йулташсем, кайар пулӗ ӗнте.

*Паҙҙа йулташӗ.* Кaç нумайа карӗ, кайар пулӗ.

*Ваңук.* Ларӑр?..

*Паҙҙа.* Тавта пуç! Сирӗнте канас пулаҭ, Хамӑрӑнта выртса çывӑрас пулаҭ, тӑта ыранта ирех кайас пулаҭ. Сывӑ пул, Ваңук!

*Салтак аҭисем.* Сывӑ пулӑр!

*Ваңукпа Йеҙук.* Сывӑ пулӑр! Йатласа ан кайӑр!

## 16-мӗш курӑнни.

### *Ваңукпа Йеҙук.*

*Ваңук* (*кӑштах тӑрсан*). Ывӑнтӑм. Вӑй лаштах карӗ.

*Йеҙук.* Ваңук, ман ҙӗре сиксех тухаҭ. Ырӑ пулмасҭ пулӗ?

*Ваңук.* Нимте мар. Есӗ хӑранӑ. Ӑшҙик тапранҙӗ пулмалла санӑн. Ах, ывӑнтӑм. Сасартӑк ыйӑх пусса килҙӗ. Çывӑрас.

*Йеҙук.* Вырт, вырт. Епӗте выртатӑп. (*Ваңук çывӑрма выртаҭ. Йеҙук аҭине пырса сиктерет. Хайа сӳнтерет. Тултан уйӑх çути кеме пуçлаҭ*). Темме ҙӗре сиксех тухаҭ. Ку ҙӗре манӑн ырра сисмест, пулӗ.

Ваҧук. (*ыйахлӑ сасапа*). Ҫывӑр, Йељук. Шутлассине ыранта шутлӑпӑр.

Йељук. Йурӗ. Аҙа ҫывратам-ха (*сӑпка йуррине хуллен, сӑмахсӑр йурлат*). Ҫывӑрҙӗ. (*Ваҧук умне пырса ларат. Ваҧук ҫине виҫӗ хутҭен хӗреҫ хурӑт. Унтан аҭине илсе тепел кукрине ҫывӑрма выртат. Уйӑх ҫути вайланат. Кӑшт вӑхӑт иртсен, ҭӳреҭерен Ҫтаппан мӗлки куранат. Вӑл ҭӳреҭе вит тӗр хуллен йапшӑнса кӗрет. Аллинҭе улӑм кӗлти*).

## 17-мӗш курӑнни

*Ҫтаппан. (кӗрет, стсенӑ урлӑ каҫса алак-ран тухат. Алӑкне пӗтӗмпех хупмаст. Кӗлтине алӑк хыҫӗнҭе ҭӗртсе йарат. Ҫулӑм тухсан, пӳртре хӗрлӗ ҫута. Ҫтаппан кайалла кӗрсе тепӗр хут ҭӳреҭерен тухса сикет. Пушар ҭанӗ ҫапма пуҫласан. Ваҧукпа Йељук сиксе тӑраҫҫӗ*)

## 18-мӗш курӑнни.

*Ваҧукпа Йељук.*

Ваҧукпа Йељук. Ах, ах! Пӗтрӗмӗр! Ах, пӗтрӗмӗр! Ах, пӗтрӗмӗр! (*Ваҧук ҫенӗкелле ҭуп-са тухат те ҫулӑмран кайалла тарса кӗрет*).

Йељук. Ваҧук, аҙапа манса йулатпӑр! Аҙана! Аҙана!

Ваҧукпа Йељук. (*сӑпка ҫӗклесе ҭӳре-ҭерен тухса сикеҫҫӗ*( (*Урамра халӑх шавла-ма пуҫлат*)

*Ҙаршав*

# ВИҪҪӖМӖШ ПАЙӖ.

(Урамра, Йӑскар пӳрђӗ ӳмӗнђе).

## 1-мӗш куранни.

Йеђук (*пӗтђенех, кӑнђала арласа ларат̆*).

Йеђук (*йурлат̆*):

3̇ 16 5 1̇ 3̇2̇ 3̇ 1̇61̇ 6.
Ђашки, ђашки, ай, сар мӑйӑр та

6 2̇ 2̇ 65 6 1̇ 165,
Ђашки ђӑшки, ай, сар мӑйӑр—

6 42 1 4 65 6 424 2.
Кампа та ларса, ай, сийем-ши?

2 5 5 21 2 4 42 1.
Кампа ларса, ай, сийем-ши?

(*малалла ҫав кӗвӗпех йурлат̆*):

Ђун хурланат̆, ђӗрем макрат̆ те
Ђун хурланат̆ ђӗрем макрат̆—
Кампа та ларса, ай, пуплем-ши?
Кампа ларса, ай, пуплем-ши?

(*арлама пӑрахат̆*). Ех, мӑнтарӑм пуранӑҫӗ... Пӗртте арлас килмест. Пӗр пыра тӑрантарасшӑн ҫын тарҫи пултӑм. Ваҥук, Ваҥук! Курмастӑн есӗ ман пуранӑҫа, пӗлместӗн... Те ђӗрӗ есӗ те вилнӗ, ҫырута йамастӑн. Есӗте хур-

лăх курса пурăнатăп пулĕ, килтете пурăнма тутлă мар. Акă ĕнте çимете çук, çын ĕçне туса тăранса пурăнатăп. Хăш ђухне хытă хурланнипе сан çинђенте манса кайатăп. Мĕлле пурăнас, мĕлле пурăнас...

## 2-мĕш курăнни.

Йеђук. Йăскар (*кĕрет*).

Й ă с к а р. Мĕншĕн тăта арламастăн? Сана ахалех тăрантарма епир çĕрме пуйан терĕн-им?

Й е ђ у к. Арласа ларнă çĕрте пуçа шукăшсем кĕђĕçте шукăша карăм.

Й ă с к а р. Тыткалакан çук сана, пулсан шукăша каймăттăн есĕ.

Й е ђ у к. Ах, пур, Йăскар акай, пур..

Й ă с к а р. (*машкăласа*) Пур.. Ман шукăшпа сан ăна ĕнте манаста пулат.

Й е ђ у к. Йăскар акай, мĕн калаçатăн есĕ? Аçтан епĕ Вађука манма пултаратăп? Вăл ман ăшранта тухмасĭ.

Й ă с к а р. Тек апла калапине ман илтес килми пулђĕ. Вăрçăри йапала вăл икĕ тĕлейлĕ. Те килет, те килмест.

Й е ђ у к. Вилмесен хăçанта пулсан килĕ.

Й ă с к а р. Ухмах! (*хĕрхеннĕ пек пулса*) Иеђук! Епĕ сана хуна ырă тăвасшăн калатăп Вилмесен килĕ, тетĕн, килсеńте вăл ĕçе питех ђармантармĕ. Есĕ çамрак, сансăпатлă— йепле хуна ху типсе пуранас тетĕн?

Йеђук. Ах тура, йепле кулӑшла калаҫатӑн есӗ, Йӑскар акай. Уппек шукӑш ман пуҫа пӗртте кӗмест.

Йӑскар. Епӗ сана уншӑн каламастӑп, хӑвӑншӑн калатӑп. Хӑвӑн ирӗк, кӗрик мӗн ту. Есӗ хурапа шурӑна курманха, апла пулсан.

Йеђук. Курнӑта-ӗҫке, Йӑскар акай, курнӑ. Пурӑнӑҫ шухӑшӗ ман пуҫа шӑтарсах тухаӗ. Епӗ ӑна есӗ каламасӑрах лайах пӗлетӗп.

Йӑскар. Вара, вара. Ака хӗле кӗретпер, мӗн снйес, тийетӗн? Мӗн тумланас, тийетӗн? Ыйткалама кайас, тийетӗн-и? Ҫавна пӗл.

Йеђук. Сана йӗрӗнтерсе пурӑннине петӗм ђунтанах сисетӗп епӗ. Анђах кӗлмеҫе кайас выранне хапрӑк-савӑта ӗҫлеме кайам, пӗђђен хырӑма тӑрантарӑп ҫавах. Ађи пурӑнна пулсан, пурӑнма канђӑртарах пулнӑ пулӗђђе.

Йӑскар. Пирӗн хӗр-упраҫпала тем тумалла хапрӑк-савӑтра. Пӗлетӗн, хӗрарӑмӑн пӗр хак—май килђӗ тутӑ, май килмерӗ—ҫакӑнсата вилӗн.

Йеђук. Сан самаххусем ман ђере тӗпнех кӗрсе ларӑҫҫӗ.

Йӑскар. Кӗтсер ҫав, кӗтсер. Шукӑшлама пӗлместӗн. Ҫавӑнпек кӗлеткепеле епӗ сар ҫу ҫисе пурӑнӑп. Ава, Ҫтаппан миҫе хут килсе карӗ кӑҫал? Мӗн тутуна пӑратӑн, тепӗр тесен?

Йеђук. Ваңук киле тавӑрӑнсан вӑл манпе ђунӑма кӑларса илӗ.

Йăскар. А тăта вилнĕ пулсан?

Йеђук. (*хăраса*) Ах! Вилнĕ пулсан? Вара ан тапрат, Йăскар акай, ман ҫӱҫсем вирелле тăрса карĕҫ.

Йăскар. Ђăнахта вилнĕ пулсан? Мĕн? Калаха?

Йеђук. Вилнĕ пулсан вара епĕте вилетĕп.

Йăскар. Ђхву!

## 3-мĕш курăннии.

Йеђук. Йăскар. Ађа-пăђасем (*лашалла выђаса ђупса кĕреҫҫĕ*).

Ађа-пăђасем. Тпру! Тпру!

Йăскар. Мĕн кирлĕ сире, шĕкĕнтĕрсем?

Ађа-пăђасем. Мĕн, Пађђа пиђей вăрҫăран тавăранна. Сăра ĕҫме ђенме йађĕҫ.

Йеђук. Ăҫта вăл. ăҫта?

Ађа-пăђасăм. Мĕн, килĕнђех. Вађук пиђейпе пĕрле пурăнтăмăр, тет.

Йеђук. Вађук пиђу сывах, тет-и?

Ађа-пăђасем. Мен, ана каламарĕ. Ђасрах пырăр сăра ĕҫме.

Йăскар. Ђупăр. Пыраҫҫĕ, тейер

Ађа-пăђасем. Йурат. Ей, малти! (*вĕҫтерсе тухса кайаҫҫĕ.*)

## 4-мĕш курăнни.

Йеђук. Йăскар.

Йеђук. Ђасрах кайса пĕлес. (*тухса кайат*).

Йăскар. Ђим-ха, курăпăр...

## 5-мĕш курăнни.

Йăскар. Çтаппан (*тепĕр йентҫен кĕрет*).

Çтаппан. Пурăнати?

Йăскар. Пурăнаҭ.

Çтаппан. Ма вилместĕн есĕ?

Йăскар. Тĕнҫе пушанса йулĕ, тетĕп.

Çтаппан. Ман шухăшпа есĕ тĕнҫене шăршлантарма анҫах.

Йăскар. Ху шăршлантар. Сан хырăм çӳхех мар.

Çтаппан. Ман кăсйата çӳхех мар.

Йăскар. Суйатăн.

Çтаппан. Мĕншĕн суйас? Есĕ суйнăшăн укçа памастăн пулĕ?

Йăскар. Кай! Урăх сана нихçанта ĕненместĕп.

Çтаппан. Мĕншĕн, Йăскар акай?

Йăскар. Е. Йеҙук кирлĕ пулсан „Йăскар акай?“ Миçе хутҫен суйрăн? Тухйа тупса паратăп, тесе суйаҭ. Йеҙука мар сана хĕрĕх çулхинете тупса памастăп.

Çтаппан. Йăскар акай! Мĕншĕн çиллентĕн-ха?

Йăскар. Кай, ăçтан килнĕ çĕре.

Çтаппан. Йăскар акай!

Йăскар. Кай, кай, кай!

Çтаппан. (*аллине кăсйине тҫикетте Йăскар çине пахса укçине шăнкăртаттарат*).

Йӑскар. (*Çтаппан çинелле çаврӑнса пӑхать*).

Çтаппан. (*тӑтах шӑнкӑртаттарать*).

Йӑскар. (*аллине ҫӑсса*) Пар тӑта, мӗн йӗкӗлтетӗн?

Çтаппан. (*укçине кӑларать*). Йеҫук хӑçан ман пулаҫ?

Йӑскар. Ы-ы.. (*патне пырса*) Итле, ҫӑтас пулаҫ кӑштах.

Çтаппан. Урӑх ҫӑтӑм çитмесҫ.

Йӑскар. Хӑ-хӑ... Ҫӑтӑму çитмест пулсан укçуна ан хӗрхен, хӑвӑртрах пулӗ.

Çтаппан. (*укçине парать*).

Йӑскар. Ах, турӑ!.. (*укçине куçне ҫаркаласа пӑхать, пӑхсан хӳмне ҫикет*).

## 6-мӗш курӑнни.

Йӑскар. Çтаппан. Паҫҫа (*кӗрет*).

Паҫҫа. Авани, ырӑ йалйышсем?

Çтаппан. Паҫҫа-еçке ку? Авани? Хӑçан çитрӗн? (*ал парассӗ*).

Паҫҫа. Хаҫ анҫах. Киле çитнӗренпе пӗр витре сӑра еçрӗмӗр анҫах. Епӗ Йеҫук патне килтӗм. Вӑл кунта пурӑнаҫ, терӗç те. Ваҫук çинҫен каласа пӗлтерес, терӗм. Çавӑнпа ҫас васкаса тухрӑм.

Йӑскар. Йеҫук хаҫ анҫах есӗ тавӑрӑннине илтсе сап пата тухса ҫупрӗ. Мӗлле хирӗç пулмарӑр вара?

Паҫҫа. Епӗ, пахҫа виттӗр тухса, тӳрех ҫырма урлӑ каҫрӑм. Йеҫук тӑта ҫилайранпа сирӗн патра пурӑнати?

Йӑскар. Ҫилайранпах. Ҫын ӗҫне тукаласа тӑранса пурӑнаҭ.

Паҫҫа. Ха. апла.

Ҫтаппан. Ҫапла. А, Ваҫук мӗлле?

Паҫҫа. Ҫавна калама пӗлместӗп. Вӑрҫа пӗрлех кӗтӗмӗр. Мана шрапнел пырса тивиҫҫен епир пӗрлехҫӗ унпала. Хытӑ вӑрҫҫа пыраҫҫӗ. Хӗйте вӗри йунлӑ пулнӑ мӗн... Кайран вара хамта астумастӑп—пӗлми пулнӑ. Мана ласарета илсе кайнӑ. Ласаретра унта епӗ виҫӗ кун кӗтсе выртрӑм Ваҫука. „Ах, ку Ваҫук килӗши, килмӗши?“ тесе кӗтсе выртатӑп. Виҫӗ кун кӗтрӗм—куҫа курӑнмарӗ. Вара вилнӗ пули. йе тыткӑна карӗ пули, тесе шукӑшларӑм, мӗншӗн тесен, пирӗн тивиҫирен пӗтӗмпе ҫирӗм салтак анҫах ҫӑлӑнса йулнӑ. Унтан пире Мускаври ласарета куҫарҫӗҫ. Мускавра пӗтӗмпе виҫ ерне выртрӑм. Хаҫ малалла сывалма киле йаҫӗҫ.

Ҫтаппан. Апла вара Ваҫук ҫинҫен нимӗнте пӗлмерӗн-и?

Паҫҫа. Ҫук. Нимте пӗлеймерӗм.

Ҫтаппан. Сан шукӑшпа мӗлле пек? Вилнӗши вӑл йе тыткӑна кайнӑ-ши?

Паҫҫа Ҫук. Пӗлместӗп.

Йӑскар. Вӑрҫӑ ҫас ҫарӑнаги? Пирӗн ҫӗнтерет теҫҫӗ, пулас?

Паҫҫа. Кам калаҭ?

Ҫтаппан. Хаҫат ҫине ҫыраҫҫӗ.

Паљља. Хаçат, вăл, суйаť. Епир нихçанта хаçата ĕненместпĕр.

Çтаппан. Патша калаť, тет: «Етем виллинђен сăрт туса тултарам, çавах парăнмастăп,» тесе калаť, тет.

Паљља. Ăна калама лайăх: вăл хăйĕн йунне тăкмасť.

## 7-мĕш курăнни.

Çавсемех. Ађа-пађасем (*тепĕр йентђен тђунса кереççĕ*).

Ађа-пăђасем. Тпру! Тпру! Паљља пиђей, епир пурнете ђĕнсе çавăрăнтăмăр.

Паљља. Ну, маттур апла пулсан. (*Çтаппанпа Йăскара*). Ĕнте пирĕн пата кайăпăр.

Çтаппан. Тавта пуç.

Йăскар. Ху килсе лар.

Паљља. Епир килĕпĕр. Сыва пулăр (*тухса кайаť*).

Ађа-пăђасем. Ей, малти! (Паљља *хыçĕнђен ђунса тухса кайаççĕ*).

## 8-мĕш курăнни.

Çтаппан. Йăскар.

Çтаппан. (*хĕпĕртесе*) Мĕн калас тетĕн?

Йăскар. Çын пĕтнипе хĕпĕртетĕн-им?

Çтаппан. Мана мĕн? Ай, епĕ пĕтес пулсан маншăн кульљанакан пулаť, тăта?

Йăскар. Пар тăта укçуна--ку çынна макăртмалли ĕç.

Çтаппан. Мĕскер калаçатăн—камăн макăрмалла тăта? Ман шукăшпа Йеђукăн, ман пуйанлăха курса, хĕпĕртемелле анђах.

Йăскар. Пар, теççĕ сана. Мĕн хĕрхенетен-им тăта çĕрсе выртакан укçуна?

Çтаппан. Парассине парăпта, анђах макăрмаллишĕн мар,—савăнмаллишĕн паратăп.

Йăскар. Йытă! Саншăн Йеђука пăсмата шел.

Çтаппан. Мĕн вара пăсмалла? Йеђук хĕр мар-ĕçке?

Йăскар. Хĕре астарсанта çылăх мар. Йеђук—арлă арăм.

Çтаппан. Ман шукăшпа арăма астарни нимте мар. Пур пĕр палăрмасҭ.

Йăскар. Йепле астарăн. Тĕлĕкĕнђете Ваңука кĕтсе пурăнаҭ.

Çтаппан. Епир ăна кĕтмелле мар тăвăпăр. Авă, илтрĕни. Пађђа мĕн каласа хăварђĕ? Кун хыççăн пĕр çыру анђах кирлĕ..

Йăскар. Мелле çыру, йытă?

Çтаппан. Ваңук вилнĕ, тесе..

Йăскар. Ђхву! Есĕ шуйтан...

Çтаппан. Есĕ ухмах. Укçаран хăратăн.

Йăскар. Мĕлле тумалла кала. Пĕр кĕрĕшнĕскер кайалла ђакмăп.

Çтаппан. (*кăсйинђен каларса пĕђĕк-çыру çырат*). Акă, ме... Йеђук килсен, пар. (*айăккала пăхса*) Авă, килет. (*тухса пытанат*).

## 9-мĕш куранни.

Иăскар. Йеђук (*кĕрет*).

Йăскар. Мĕншĕн пуçна ђиксе таварнатăн?

Йеђук (*йĕрсе йарат*). Ваңук... вилнĕ.. пулмалла... Пĕтрĕ ман пурăнăç ĕнте.

Йăскар. Ан макăрха ђасах. Тен, пурнати, тен? Çыру пур. Вуласа пăхха.

Йеђук. Аçта çыру, ăçта?

Йăскар (*çырува хўмрен каларса парат*) Акă. Тен Ваңук çырати, тен?

Йеђук, Ах, ђĕре сиксех тухат... (*тĕленсе пăхат*). Çырни Ваңук алли пек мар... Ваңук вилнех пулĕ. Кама вулаттарас ши? Паљђа патнех тепре кайам-ха. (*Кайма тăрат*).

## 10-мĕш куранни.

Йеђук. Йăскар. Çтаппан (*васкаса кĕрет*).

Çтаппан. Мĕн вуламалла, кўр хам вуласа парам..

Йеђук Нимехте мар. Паљђа патне кайас, терĭм...

Çтаппан. Есĕ ун патне пĕре кайса килнĕђђĕ мари, вара?

Йаскар. Çыру вуланăшăн мĕн пулат, вулаттар ĕнте? Унта кайса килиђђен халех пĕлетĕн?

Йелђук. На, вуласа пар.

Çтаппан. Хавас, питĕ хавас.

Йелђук. Ах, Çтаппан, ђасрах вула.

Çтаппан. (*Йелђук çине пăха-пăха вулат*). «Теревни Хыр-Кассы. Йелене Кутрашевой. Сывă пурăнаттăри. Иван Кутрашев сире нумай пурăнма хушса хăварђĕ.»

Йелђук. (*шуралса кайат*).

Çтаппан. (*вулат*) «Шраппел кăкăрне çемĕрсе кайсан, виçĕ сехетте пурăнмарĕ.»

Йелђук. А-а-а! Пĕтерђĕç! Пĕтерĕĕç, шуйтансем! Ах, пĕтерђĕç, Ваңук, Ваңук!.. Ах, пĕтерђĕç! А-а-ах, ха-ха-ха-ха! А-а-аа!.. (*кайса ÿксе йанăшса выртат*).

Йаскар. (*Çтаппана*). Шуйтан! Есĕ туран, çĕр çăтса антараççĕ!

Çтаппан. (*аллипе Йаскар çăварне хуплат, çилленсе*) Ан кăшкăр, шапа çăварĕ!

Йаскар. Кăшкăратăп!

Çтаппан. Кай кунтан, епĕ хамах май кÿретĕп.

Йаскар. Каймастăп.

Çтаппан. Апла пулсан, тыт тăтах, выçлăх пыр! (*укçа парат*).

Йаскар. Кирлĕ мар укçу!

Çтаппан. (*хушса парат*) На тăтах!

Йаскар. Куçăнтан сурам!

Ҫ т а п п а н. (*тата хушса парат*) Тыт, хампар айёнђи!

Й ă с к а р. Халăха кăшкăратăп.

Ҫ т а п п а н. На пётёмпех, тăранми хырăм!

Й ă с к а р. (*илет*). Ҫылăхё сан ҫине пултăр! (*тухса кайат*).

Ҫ т а п п а н. Ђхву! Шуйтан уёр арăмё!

## 11-мёш курăнни.

Йеђук. Ҫтаппан. (*Йеђук ҫине пăхса тăрат. Хёвел анат*).

Й е ђ у к. А а-а!.. Пётерђёҫ! Ваңук, ах, Ваңук, ăҫта есё? Ах, ăҫта есё, ăҫта-а?

Ҫ т а п п а н. (*Йеђук ҫине пёшкёнсе*) Йеђук!

Й е ђ у к. Кам есё?

Ҫ т а п п а н.. (*айăккалла*) Тăнран тухса карё.

Й е ђ у к. Кам есё ?

Ҫ т а п п а н. Епё...

Й е ђ у к. Кам?

Ҫ т а п п а н. Сана ђунтан вартан йуратакан ҫын.

Й е ђ у к Есё Ваңук-и, вара? (*тăрса ларат*)

Ҫ т а п п а н. Епё сана ҫак ҫутă тёнђерен ытларах йурататăп...

Й е ђ у к. (*мăйне ђасса пăхат*) Есё мана йурататăн-и? Есё тăшман, ха-ха-ха...

Ҫ т а п п а н. Мён тăвасах, хама хам ђиксе пăрахăттăм! Йеђук! Ваңук вилнё...

Йеђук. Ваңук вилнĕ?..

Ҫтаппан. Ваңук вилнĕ... Епĕ сана Ваңукран ытла йуратататăп.

Йеђук. (*виттер пăхса*). Ҫук... Есĕ Ваңук мар.

Ҫтаппан. Епĕ ђаплă пуйан. Ман мулсем нумай..

Йеђук. Есĕ мана мулпа астарасшăн-и?

Ҫтаппан. Итле, Йеђук. Епĕ Ваңук мар... Ҫавах, манăн ђĕре вут ђулĕ пек тивсе кайма пултараймаст-и, вара? Манран пĕтĕм йал хăраса тăма пултарат. Епĕ сана хура ҫăкăр ҫитермĕп, хура ĕҫпе санăн ҫинђе пиллĕкна хытармăп...

Йеђук. Кай ман ҫумран! Хăвар мана! Ман ђĕрене вырăнтан ан хускат. Епĕ ĕмĕртете санăн арăм пулас ҫук. Есĕ ҫапатăн.

Ҫтаппан. Сана-и? Ăҫтан ман сана ҫапас? Арăма ђун тарăхнипе хĕненĕте, пулĕ. Йуратнă пулсан епĕ ун ҫине сивĕ куҫпата пăхас ҫук. Ех, мĕн калас, иртнĕ пурăнăҫшăн! Епĕ сана ылтăн пек ађашласа пăхса пурăнăттăм...

Йеђук. Ан тархасла. Санпа пĕтĕҫсе пурăнăҫ суранне тин тӳрлетес ҫук.

Ҫтаппан. Ех, Йеђук! (*Йеђук ђĕркуҫҫи ҫине аллисене хурса, Йеђук умне ђĕркуҫланса ларат*). Хĕрхен мана... Халиђен мана никамта йуратман. Йе ман ђĕрере ҫунакан вут ахалех сӳнсе ларĕ-ши? Сана йуратма пуҫланăранпа епĕ ухмаха йернĕ сын пек ҫӳретĕп

Аçта кайсанта есӗ ман куç умӗнђе, ман çине пăхса ман ђӗрене шăрататăн. Епӗ сан паталла аламсене ђăсса пӗђӗк ађа пек йӗретӗп. Йељук, Йељук—йурат мана!

Иеђук. Ей, телейсӗр ђун. Хӗрхенетӗп епӗ сана. Иавăр пулмалла саната. Санранта ыра çын пулађђӗ-и, теп. Çавахта хăвар есӗ мана. Епӗте ђере тапраннă çын. Телей курас çук есӗ манпала...

Çтаппан. Савна Йеђук! Çӳлти çута хӗвелте ман ђуна сан ђухлӗ савăнтараймасђ. Есӗ мана йурату самах памастăн пулсан, епӗ пайанах хамăн пӗтӗм пуйанлăха хӗм кăвар туса салатса йарăп. Унтан вара хам кăкăра хамах çӗçӗпе касса çурăпта санăн уру умне килсе ӳксе вилӗп.

Йеђук. Ах, хăрушă-çке! Ахаљте пусăннă ђуна есӗ тăтах пăвса илес тетӗн-и? Темле пулсанта, кай, мана хама пӗђђен пуçпа шухăшласа илме пар.

Çтаппан. Иеђук!..

Иеђук. Кай ђасрах! Авă, кас пулађ, ађапăђасем выљама тухнă. Вӗсем халех кунта килеççӗ... (*Катара савă йурри илтӗнет*).

Çтаппан. Сыва пул, йуратнă Йеђук! (*туха кайат*).

## 12-мӗш курăнни.

Йеђук (*пӗђђенех*).

Йеђук. Ах, мӗлле çын вăл. Çтаппан... Хӗрхенетӗп епӗ ăна... «Йеђук, Йеђук!» тет...

Пысăк кайăк пек вĕççе килђĕ вăл ман çумма. Унăн сăмахĕсем ман ăша вăрă пек шăппăн-шăппăн кĕрсе ларђĕç!.. (*астуса илсе*). Ваңук, Ваңук! Аçта есĕ? Илтетĕни хăвăн йуратнă йултапшна? Çук, есĕ илтместĕн... Манăн ђун хурланат̆, ђĕрем макăрат̆... Есĕ катари ђикĕре тапаланмасăр выртатăн... Йун йухат̆... Шăлне йĕрнĕ... (*хăраса ухмаха йерне пек кăшкăрса йарат̆*) Ах-ха-ха-ха-ха!... (*ђупса тухса кайат̆*).

## 13-мĕш курăнни.

Вайă ађисем (*йурласа кĕреççĕ Карта ăшĕнђе Аңукпа Ваңук*).

Вайă ађисем (*йурлаççĕ*):

| | | | |
|---|---|---|---|
| 2̇ 5̇ | 3̇5 | 2 7 | 1̇6 |
| 5 5 | 1̇ | 7 5 | 6 |
| Шĕђĕк | çеç | пу - те - | не |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 7. 2̇ | 2 1̇ | 5 5 | 50 | |
| 5 5 | 4 4 | 5 5 | 50 | (2 хут). |
| Сарă | тулла | йу - ра - | тат̆ | |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 7 2 | 6 | 7 2 | 1̇ |
| 5 5 | 4 | 5 5 | 3 |
| Йу - ра - | тат̆ | йу - ра - | тат̆. |

| | | |
|---|---|---|
| 7 2 2 1 | 5 5 5 0 | |
| 5 5 4 4 | 5 5 5 0 | (2 хут). |
| Ђанахах та | йу - ра - тат | |

*(малалла ҫав кӗвӗпех йурлаҫҫӗ):*

Ай, хай, ађа Ваӊук пур
Ҫав Аӊука йуратат. (2)
Йуратат, йуратат,
Ђанахахта йуратат. (2)

*(Ваӊук карта варрине тухса Аӊука ђуп тӑват. Вара вӗсем картаран пӗр хӗр, пӗр ађа суйлаҫҫӗ. Суйланисем карта варрине тухаҫҫӗ. Суйлакансем вӗсем выранне тӑраҫҫӗ. Уптан вара ҫавнах тепре йурлаҫҫӗ. Йурласа пӗтернӗ ҫӗре кайарах йулчӑ ађисем ђупса кӗреҫҫӗте Йелук шыва сикрӗ, тесе каласа кататаҫҫӗ).*

Кайарах йулнӑ ађисем. Ай-ай! Йелук инке шыва сикрӗ!

Вылакансем: Кам? Кам? Йелук инке? Ӑҫта? Шыва сикрӗ? Айтӑр ђасрах! (*ђупса тухса кайаҫҫӗ*).

## 14-мӗш курӑнни.

Йаскар (*стсенӑ урла ђупса тухса кайат*).

Йаскар. Ах, шуйтан! Ман пуҫа ҫийес, терӗн-и? Ах, шуйтан! Ама йытӑ! Шыва сикет тӑта! (*тухса ђупат*).

## 15-мĕш курăнни.

Çтаппан (*шывран туртса кăларна Йеђука йатса кĕрет. Ун хыçĕнтђен*). Йăскар. Пăрђкан. Муççа. Вăйăађисем тăта ытти çынсемте (*кĕреççĕ*).

Çтаппан. Йеђук, Йеђук..

Çынсем. Сиплес ăна! Шăналăкпа силлес...

Çтаппан. Намастăп! Йеђук кўпсе кайман. Епĕ ăна шыва путађенех туртса кăлартăм. Авă, кураттăр, вăл ура çине тăмата пултарăт (*Йеђука ура çине тăратăт*).

Йеђук. Хура халăх каçарăр мана! (*Ывăннипе Çтаппан аллиçине кайса ўкет*).

Пăрђканпа Муççа. Ах, Йеђук! Кĕçех вилеттĕнђĕç, ађам!

Пĕр старик. А, Йеђук, есе ку шухăша хăçан тытрăн?

Йеђук. Ваңук вилнĕ тесе çыру килђĕ. Вара ман куçăмра çут çанталăк тĕттĕмленсе çитрĕте ђăтаймарăм...

Пĕр старик. Ай, йай, йай! Ку вăрçăра нумай халăх вилђĕ те анђах ђĕрĕ пурăнакансем пурте вĕсен хыççăн каймĕç. Епĕте калатăп: Ман тахçанах вилес пулăт, тетĕп. Темме вилес килмест. Çут çанталăках паха пек туйăнат. Ах, хах-ха!.. Ватăлтăмар ĕнте...

Çтаппан. (*хуллен*) Йеђук, епĕ сана ђунтан вартан калатăп: хĕрхенетĕн-и есĕ мана?..

Йеђук. *(Çтаппан çине пăхса)* Ман пурăнаçа çалнăшан—епĕ санăн...

Çтаппан. Манан йуратнă Йеђук!.. (*Йеђука аллинђен тытат*). Ыра сынсем! Ваттисем, çамрăксем! Епĕ Йеђука кађђа илетĕп—çавăнпа çака кунсенђе сире туйа пыма ђĕнетĕп!..

Çынсем. А, йурат, йурат! Пырăпăр! Пăрăпăр!

Вайă ађисем (*Хăвăрт ђупса çавăрăнса йурлаççĕ*).

Ай, хай, пиђђе Çтаппан пур
Йеђук инкене йуратат (2)
Йуратат, йуратат
Ђанахахта йуратат (2)

*Ђаршав.*

# ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ.

(Йăскар пӳрҗĕ).

(Стсенă сылтăм йенҗе кĕреке сĕтелĕ. Сĕтел тавралла çăка сыхса тултарнă. Пӳрт тулли йех хăнасем. Çăплах ĕçтереççĕ, çаплах çитереççĕ. Сулахайра, рампă çывăхнерех икĕ пиҗке: пĕри сак çинҗе, тепри урайĕнҗе. Тулта туй сикет. Пӳртре ташлаççĕ, йурлаççĕ. Сĕтел хушшинҗе кĕрекеçсем лараççĕ. Тăваттăмĕш пай пĕтнĕ çĕре тул çутăлат).

## 1-мĕш курăнни.

Пӳртре хăнасем. 2-кĕ туйарăмĕ. (*ташлаççе*). Мусăкçă (*хĕрарăм ташши çеммине калат. Туйарăмсем ташланă вăхăтра тулта туй сикет. Туй сикекенсем ака çака сăвăсене каласа параппан çапса йурлаççĕ*):

2 2 | 1 6 5 |
Туй, туй, | туй, тĕсе, |

1 2 4 | 2 2 1 |
Туй. туй, | туй, тесе, |

2 2 2 2 | 1 6 5
Çĕр çĕмĕрсе | килтĕмĕр—

1 2 4 4 | 2 2 1 |
Çул йусама | тухмасан |

6 6 5 5 | 2 2 2 |
Епир киле | кайас çук. |

Епир туйа каймасан (2)
Туй ёренки килес çук,
Инке илсе килес çук,
Айар, айара.
Ой, питђе Çтаппан пур (2)
Инке лайăх Йеђук пур,
Йеђук пурта Ваңук пур,
Айар, айара.
Туй, туй, туй тăвас (2)
Туй тăваста çуй тăвас,
Çапла мар-и ађасем?
Айар, айара...

(*Тулта çака самахсене йурласа петерсен пӳртре икĕ туйарăмĕ ташлама тђаранаççĕ*).

## 2-мĕш курăнни.

Çавсемех. Туйарăмĕсем. (*Тулта малалла туй хуллентерех сикет. Туйарăмĕсем тултан, тултисемпе пĕр тĕл туса йурласа кĕреççĕ. Кĕрсен йурлама кăштах тђиранаççĕ. Туйарамсем йурлама тђаранна вăхăтра малтан ташланă икĕ туйарăмĕ кĕрекерисене пырса тайăлса ака çапла тђыс тăваççĕ*).

2-кĕ туйарăмĕ. Енте ан йатлăр, хăтасем, тăхлађăсем! Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас тесе сикрĕмĕр.

Муçça. Ăрахмат ђыс тунăшăн.

Йăскар. Ташланă хыççăн ĕçĕр-ха (*тултарса парат*)

2-кĕ туйарăмĕ. Енте туйран перекетлĕ пултăр (*ĕçеççĕ*).

Ҫтаппан. (*тайӑлса*) Тавта пуҫ хисеп тунӑшӑн. (*Тултан кӗнӗ туйарӑмӗсем, маяллн сӑвӑсене каласа, йурлама пуҫлаҫҫӗ. Туйарӑмӗсем йурланӑ вӑхӑтра 2-кӗ туйатӡи тухса ташлаҫҫӗ. Мусӑкҫӑ арҫын ташши ҫеммине калат. Туйарӑмӗсем акӑ ҫакӑ сӑмахсене каласа йурлаҫҫӗ.*)

Туйарӑмӗсем:

Хӑта пире хваттер йар, (2)
Хваттер йарта хӗрна пар, (2)
Айар, айара.
Хӗрна парта тӳшек пар, (2)
Тӳшекки пултӑр ҫиттиллӗ.
Ҫитти пултӑр ӡӗнтӗрлӗ.
Айар айара.
Ӡӗнтӗр пултӑр шӑрҫаллӑ, (2)
Шӑрҫи пултӑр тенкӗллӗ,
Тенки пултӑр майраллӑ,
Айар, айара.
Майри пултӑр аӡаллӑ,
Аӡи пултӑр картуслӑ,
Картус ҫинӡе вӑй выӆаҭ,
Пирӗн алра хӗр выӆаҭ.
Айар, айара.
Епир ӑна каламан, (2)
Туй аӡисем каланӑ,
Туй аӡине тур хушнӑ,
Айар, айара...

(*Ҫакӑ сӑмахсене йурласа петерсен икӗ туйатӡи ташлама ӡаранаҫҫӗ*).

## 3-мĕш куранни.

Çавсемех. Туйарамĕсем. Туйаҫисем.

*(Тулта малалла туй сикме ҫаранат. Туйаҫисем тултан, пӳртрисеннеле пĕр тĕл туса йурласа, кĕреççĕ. кĕрсен йурлама кăштах ҫаранаççĕ. Туйаҫисем, туйарамсем йурлама ҫаранна вăхăтра ташлакан 2-кĕ туйаҫи кĕрекерисене пырса тайăлса акă çапла ҫыс тăваççĕ.)*

2-кĕ туйаҫи: Енте ан йатлăр хăтасем, тăхлаҫăсем. Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас тесе сикремĕр.

Муçça. Арахмат ҫыс тунăшăн.

Йăскар. Ташланă хыççăн ĕçĕр-ха (*тултарса парат*).

Çтаппан. (*тайăлса*). Тавта пуç хисеп тунăшăн.

(*Кун хыççăн тултан кĕнĕ туйаҫисем, туй арăмĕсем малалли савăсене каласа йурлама пуçлаççĕ. Вĕсем йурлана вăхăтра 2-кĕ туйаҫи тата 2-кĕ туйарамĕ тухса тăваттăн ташлаççĕ. Мусăкçă арçын ташши çеммине калат. Тăракан туйаҫисем-туйарамĕсем акă çака сăмахсене каласа йурлаççĕ*)

Çиҫĕ çырма пуçĕнҫе (2)
Çиҫĕ çул кайман йур выртат (2)
Айар, айара.
Йурне ҫавса пăхрăмăр, (2)
Кĕрĕк татăкки тупрăмăр (2)
Айар, айара
Кĕрĕк татăкки кăсйинҫе (2)

Катăк ђĕлĕм тупрăмăр (2)
Айар, айара.
Çавă катăк ђĕлĕме (2)
Кукрашкинђен хуçрăмăр (2)
Айар айара.
Йеђукпала Вађука (2)
Кĕçĕрхи çĕр уйартăмăр (2)
Айар, айара...

*(Çакă сăмахсене йурласа пĕтерсен 2-кĕ туйађи тата 2-кĕ туйарамĕ тăваттăн ташлама ђарăнаççĕ, Вара вĕсем кĕрекерисене тайăлса акă çапла ђыс тăваççĕ).*

2-кĕ туйађи тăта 2-кĕ туйарамĕ. Ĕнте ан йатлăр хăтасем, тăхлађăсем. Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас сикрĕмĕр.

Муççа. Арахмат ђыс тунăшăн.

Йăскар. Сикнĕ ђыççăн ĕçĕр-ха *(тултарса парать).*

2-кĕ туйађи тăта 2-кĕ туйарамĕ. Ĕнте туй перекетлĕ пултăр (*ĕçеççĕ*).

Çтаппан. Тавта пуç хисеп тунăшăн!

## 4-мĕш курăнни.

Çавсемех. Туйпуçĕ (*керет*).

Туйпуçĕ. Ну, ĕнте, туй çыннисем! Ĕнте ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр, ташларăмăр, сикрĕмĕр — хуçасене таптарăмăр! Ĕнте тул çутăлнă çулнала пирĕн киле кайма тивĕçлĕ.

Туйађисем. Кайатпăр! Кайатпăр!

Ҫ т а п п а н. Ей, аслӑ туйпуҫӗ! Авалхи йӑлавпа ҫул курки тума ирӗклӗ пулатӑн пулӗ?

Т у й п у ҫ ӗ. Тавтапуҫ сана, пӗҫик кӗрӳвӗм. Епир аслӑ ҫулпа килтӗмӗр—сана асла хумашкӑн, аслӑ ҫулпах тухса кайма ирӗк туса пар!

Ҫ т а п п а н. Пысӑк салам сана, аслӑ туйпуҫӗ.

(*Туйпуҫӗ ӗҫетте тухса кайас умӗн хӑйматлӑх йурри́не ҫапла йурлать*):

4 4 2 4 2 1 6 2 6
Тухатите тухмасти,

2 2 1 2 6 5 6
Тухатите тухмасти?

2 2 1 2 6 5 4 6 5
Епир килэ кайатпӑр,

6 6 5 5 4 2 2
Епир киле кайатпар

(*Туйпуҫӗ, ун хыҫӗнтен туйатҫисем тухса кайаҫҫӗ*)

## 5-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех. Туйарӑмӗсем (*ҫав кӗвӗпех малалла йурлаҫҫе*):

Тавай пирӗ йапала (2)
Трантас кашти аванитҫен (2)

Епир панă укçине (2)
Сĕтел ури тайлиҫҫен (2)
Йĕрри тавра пĕхрăмта (2)
Пирĕн кин пеки пĕрте çук—
Йепле пулма пĕлнĕши?
Ах, кинĕм пуканне,
Пĕҫик кинĕм пуканне.
Çавах илсе кайатпăр,
Ай, йай, йай, йай, йай, йа...

Й ă с к а р. Апла пулсан кĕçĕнçынсене кĕреке умне тăратаста пулĕ...

Х ă й м а т л ă х. А, вăл ĕнте ман ĕç пулаť. Айтăр хампара! (*Туйарăмсем, йулнă туйаҫисем, мусăкçа тăта ыттисемте Çтаппанпа хăйматлăх хыççăн тухса кайаççĕ. Пўрте кĕрекерисем анҫах йулаççĕ*).

## 6-мĕш курăнни.

Йăскар. Муççа. Хăнасем.

Й ă с к а р. Ĕçĕр-ха, çийĕр-ха, ырă тăвансем!

Х ă н и с е м. Ăрахмат! Ĕнте пайан ĕçрĕмĕрте, çирĕмĕрте...

М у ç ç а. Карҫăк! Епир хĕр паратпăр-ĕçкĕ? Йепле саванса йурлас мар манăн?

Й ă с к а р. Йурлах ĕнте.

Х ă н и с е м. Çаплах ĕнте, йурлас пулаť.

М у ç ç а. (*йурлаť*) Ейан, айан, айан, айаййах та ай, йай, йа-ах...

Й ă с к а р. Ĕçĕр-ха, çийĕр-ха, савнă тăвансем!

Хăнисем. Арахмат! Енте пайан ĕçрĕмĕрте, çирĕмĕрте.

Муççа. Картăк! Епир ывăл авлантаратпăрĕçке? Мăнма савăнса ташлас мар ман, Муççан?

Йаскар. Ташлах ĕнте.

Хăнисем. Çаплах ĕнте, ташлас пулат.

Муççа. *(ташлат)*

Тиллит, тиллит тил ури,
Тил ури мар хĕр ури,
Айар, ай, йай, йай,
Айар, айар, айара...

*(ташласа пырса питкеçине кайса ўкет).*

## 7-мĕш куранни.

Çавсемех. Пăркан *(тухса кĕрет).*

Пăркан. *(Муççана)* Муççа, Муççа!

Муççа. Мĕн?

Пăркан. Ванук вăрçăран таврăннă...

Муççа. Суйатăн?..

Пăркан. Суймастăп. Авă, хал урамра вăлверпе çурет.

Муççа. *(урăлса кайса)* Е, тет, тет, те... *(Тултан хер йерри мусăкĕ илтĕнме пуслат).*

Пăркан. Килеççĕ *(сынсем хушшинелле пытанат).*

## 8-мĕш куранни.

Çавсемех. Йелукпа Çтаппан *(кĕреке умне пырса тăраççĕ).* Туй халăхĕсем.

Кĕрекепуçĕн йулташĕ. Муççа шăлăма тăратăр.

Йӑскар. Муҫҫа!

Муҫҫа. Мӗн?

Йӑскар. Сӗтел хушшине ларас пулат̆. Кӗҫӗн сынсем умра тӑраҫҫӗ.

Муҫҫа. Кай!

*Й*ӑскар. Йала ан култар!

Муҫҫа. И... йала култарасси тин пуҫланат̆, пӗлетӗн-и? (*тӑрса ларат̆*).

Кӗрекепуҫӗн йулташӗ. Муҫҫа шӑлӑм, тӑрах ҫасрах, ҫамрӑксене пиллес пулат̆.

Муҫҫа. Пиллеместӗп епӗ вӗсене!

Йӑскар. Ҫарӑн, йал ухмаххи! Ларнӑ пултӑр халех сӗтел хушшине.

Муҫҫа. Лармастӑпта, пиллеместӗпте.

Йӑскар. Ах, турӑ, персе тултарнӑта нимнете пӗлмест, тӑта.

Ҫтаппан. Муҫҫа пиҫей! Мӗншӗн есӗ ман кӑмӑлӑма хуҫасшан?

Муҫҫа. Есӗ... кам пулатӑн?

Ҫтаппан. Муҫҫа пиҫей!..

Муҫҫа. Ихи-хи хи!..

Ҫтаппан. Муҫҫа пиҫей!!

Муҫҫа. Епӗ тахҫанах Муҫҫа пиҫей...

Ҫтаппан. Муҫҫа пиҫей! Хуна ху ытлашши ан ман. Есе манӑнне ӗҫсе шутран тухса карӑн!

Муҫҫа. На хӑвӑнне хӑвах. Кирлӗ мар мана санӑн нимте. (*сӗтел ҫинҫен ереке кӗленҫине илсе Ҫтаппан ҫине пеме тӑрат̆. Муҫҫана алран тытаҫҫӗ*).

Ҫтаппан. Ҫарӑнатӑн пулсан ҫарӑн, Муҫҫа!

Муçça. Епĕ санран хăрамастăп!

Йăскар. Çыхса пăрахас ăна, ухмаха!,.

Муçça. Епĕ ухмах мар! Епĕ хам пÿртре! Хурах!

## 9-мĕш куранни.

Çавсемех. Ваңук (*керет*).

Пурте. Ах!.. (*Пурте теленсе хытса кайаççе. Йеҗук Ваңук йеннелле пĕре ура йарса пусатте антан кайса ÿкме тарат. Çтаппан Йеҗука çĕклесе тенкел çине лартат*).

Ваңук. (*тăрсан, тăрсан*). Аван туй тăваттăр-и?

Муçça. Ваңук шăлăм! Ах, Ваңук шăлăм! Вĕсем мана кĕçех çыхса пăрахаҗҗĕç!

Ваңук. Камсем? (*Çтаппанпа Йеҗук çине кăтартса*). Акă çаксем-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Иккĕшете паллана çынсем... (*Йăскара*). Есĕ-те хĕр паратăни-ха, йĕке хÿре?

Йăскар. Манран ан мăшкăла. Арăмна пĕл...

Ваңук. Пĕлетпĕр. (*Йеҗук çине пахса куллен кулса парат*). Ха хă-ха... Җипер, җипер, кĕçĕн çын! Кĕçĕп кĕрÿвĕте җухăн мар пулас... Арăмпе майра пекех тумлантарнă... Мĕн җухлĕ тÿллерĕн ку арăмшăн? Хулăм укçи кăштахта пулсан пана пулĕ?

Çтаппан. Сан укçу мар...

Ваңук (*шăлне çыртса*). Сан укçу мар? Арăму камăн? Епир вăрçăра йун тăкнă җух есĕ кунта арăмсене пусмăрлатăн-и?,

Ҫ т а п п а н. Епӗ сан арӑмна сутнӑ илмен. Вӑл хӗйех мана савса каҫҫа пыраҭ.

В а ҥ ҫ у к А!. Ӑҫта епӗ? Камсем есир? Виҫӗ уйӑх Австрире тыткӑнра пурӑннӑ ҫух епӗ кун пек пуласса шухӑшламанҫӗ. Ах, килте мана йуратакан йулташ кӗтсе пурӑнаҭ, тесе, тыткӑнран тухса тартӑм. Хамӑр йала курсан ҫун хӗпӗртенипе ҫӑтаймарӑм — макӑрса йатӑм . Йала ҫитсен—йалӗпе туй сикет. Кам туйӗ ку? тетӗп... Пӗр сӑмах та ҫӗнмеҫҫӗ, йытӑран тарнӑ пек хӑраса тараҫҫӗ... М-мх!.. Ман йун тӑкӑнни сан пуҫ ҫине килтӗр!

Ҫ т а п п а н. Есӗ суйатӑн! Есӗ тыткӑнра пулман! Есӗ тарса пурӑннӑскер! Епӗ сана халех тыттарса йарӑп! Тытар ӑна! Тытӑр!

Ҫ ы н с е м. (*Ваҥҫука тытма тӑраҫҫӗ*).

В а ҥ ҫ у к. (*араслан пек пуҫне каҫӑртаҭ*) Сирӗлӗр ман ҫумран, пыйтӑсем! (*сирӗлеҫҫӗ*). Епӗ акӑ ҫакӑнтан тепӗр сӑмах ыйтам. (*Йеҫҫука*) Савнӑ йулташӑм! Паллатӑн-и есӗ мана?

Й е ҫ ҫ у к. (*ҫӗнмест*).

В а ҥ ҫ у к. Йе ҫакӑ ҫуралса, татӑлса пӗтнӗ кӑвак тумтирлӗ ҫынна йышӑнас теместӗн-и?

Й е ҫ ҫ у к (*ҫӗнмест*).

В а ҥ ҫ у к. Мӗ ҫӗнместӗн? Епӗ окопра ҫӗрсе выртнӑ ҫухнете, тыткӑнра выҫӑхса пурӑннӑ ҫухнете сан ҫинҫен анҫах шухӑшлаттӑмҫӗ. Манӑн пысӑк ҫунат ӳстерсе сан ҫумна вӗҫсе килес килеҫҫӗ. Епӗ санпа тыткӑнран тухса тартӑм. Австрин аслӑ вӑрманҫе тискӗр кайӑксемпе пӗрле пурӑнтӑм. Хурал таракансене

улталаса аслă Тунай шывĕ урлă ишсе каç-рăм. Епĕ санран пĕр виçĕ сăмахта пулин илтме тивĕçлĕ. пулĕ, тесе шаннăђђĕ.

Й е љ у к. Ей, телейсĕр Ваңук. Епĕте сана нумай кĕтрĕм. Анђах, турă тепер тĕслĕ çыр-нă. Епĕ ĕнте тин сан пата пырсанта хам те-лейе тупас çук. Кайарах пултăн... Ђăннипе каласан, епĕ сана хĕрхенетĕп. Сут тавас те-тĕн пулсан, сут ту—санăн ирĕк.

В а ң у к. Есĕ апла калатăн... Хаљ тăта есĕ йуратса кайатăн-и?

Й е љ у к. (*вилнĕ пек*). Йуратса...

В а ң у к (*кăкăрне тытса*). А!..

Ç т а п п а н. Тытăр çакă таркăна!

Ç ы н с е м (*тытма тăраççĕ*).

В а ң у к (*ваљвер кăларса*). Ан тапранăр вырăнтан! (*Çтаппан çине аллине йерипе ха-партса теллеме пуçлат*). Епĕ сана авлан-тарас, тетĕп, Çтаппан...

Ç т а п п а н. М-мхм!.. (*ђавсине çĕклесе тыт-са Ваңук çине, кашкăр пек пăхса тăрат ун-тан шуйтан пек кулса йарат*).

М у ç ç а. Ваңук шăлăм, тархасшăн ан пер!..

К ĕ р е к е п у ç ĕ н й у л т а ш ĕ. Йун ан тăк, Ваңук..

В а ң у к (*аллине усса*) А, Ваңук!.. Ваңу кăн ђĕри сўнмен!! (*Йељука*). Ну?! Пăрахатăни есĕ çакă намăс тумтире?

Й е љ у к. (*ђĕнмест*).

В а ң у к Й е љ у к?! (*Йељук пăтнелле ура йарса пусат*).

Йеђук (*ђӗнмест*).

Ваңук. Сана венђетре тӑнӑ упӑшку, Ваңук, епӗ сана калатӑп: хывса пӑрах халех ҫакӑ йӗрӗнђӗке, ай, ӗпӗ хам тытса ҫурса пӑрахасса кӗтетӗни?

*Й*еђук. Ђарӑн, Ваңук! Епӗ тин санӑн арӑму мар. Мӗн тӑвас тенине ту...

Вӑңук. *Й*улашки хут калатӑп епӗ сана... Манӑн ҫунса кайнӑ ӑшђикпӗн кала: таварнатӑни есӗ ман пата кайаллах?

Йеђук. (*хытӑ*) Тавӑрӑнмастӑп! Ака... на!... Ку сан ҫумна ҫыхнӑ сӑнђӑр! Мана вӑл урӑх кирлӗ мар! (*ҫӗрне хывса перет*).

Ваңук. Вил апла пулсан!... (*персе пӑрахат*)

Йеђук. (*аллисемпе вӗҫнӗ пек туса илетте кайса ӳкет*).

Ваңук. (*вӑђверне пӑрахат. Унтан ухмаха йерсе, ђетресе сывлӑша хӗйӗн ӑшне туртса илет*). Йун! Йун! Каллех йун!.. Ахха-ха-ха-ха! (*ђупса тухса кайат*).

Ҫтаппан. Йеђук!.. (*Йеђук ҫине пырса ӳкет. Халӑх хӑраса хытса кайат*).

*Ђаршав.*

ВЕҪӖ.

# Работы того же автора:

## А. Драматические:

1. Сутра. (В суде). Комедия шутка в 1 действ.
2. Йалта. (В деревне). Драма в 4-х действиях.

## Б. Беллетристические:

1. Лурский. Повесть. (На русском языке).
2. Ошибка. Рассказ. (На русском языке).
3. Тевик. Предание о чувашском богатыре. В стихах. (На чувашском языке).

## В. Музыкальные:

1. Аҫа-пăҫа сасси. Сборник чуваш. детских песен. С об'яснением игр.
2. Ҫăваш йуррисем. Сборник 38 гармонизированных для хора à capella чувашских песен.
3. Хитре йурăсем. Сборник 10 одноголосных чувашских песен с аккомп. на ф-но.
4. Ҫÿк. (Моление киреметю). Сцена для соло, хора и оркестра.
5. Вăйă. (Хоровод). Сцена для соло, хора и оркестра. Тоже для оркестра.

## Г. Научные и учебные:

1. Школа этюдов для скрипки. I часть.
2. Учение о разрешении интервальных двухзвучий. Пособие для учащихся.
3. Записки по элементарной теории музыки. Пособие. для учащихся Педтехникумов.
4. О влиянии китайского мелоса на чувашское музыкотворчество. (Готовится к докладу в об-ве изучения местного края).

*Издательница.*